24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941
ОКТЯБРЬ
2
КĔÇНЕРНИКУН
232 (5947) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту

Пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн аслă праздникĕ — Октябрьти социализмлă аслă революцин уявĕ çывхарса килет. Çак праздника пирĕн çĕршыври ĕçсынисем кăçалхипе XXIV-мĕш хут уявласа ирттереççĕ.

Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа вунçĕ çул тултарнине уявланă чухне Баку совечĕн чаплă ларăвĕнче Сталин юлташ, çĕнĕ пурнăçа тăвас ĕçри йывăрлăхсем çинчен, пирĕн кĕрешӳри йывăрлăхсем çинчен каласа: «Пирĕн строительствăна вутхĕм айĕнче туса пымалла пулнă», терĕ. Ун чухне совет влаçĕ, ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç йывăр та юнлă вăрçă туса пынă хыççăн, хăйĕн пурнăçне йĕркене кĕртме кăна тытăннă пулнă.

Халĕ, Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа XXIV çул тултарас умĕн, совет халăхĕн каллех хăйĕн строительствине ирĕксĕрех вутхĕм айĕнче туса пыма тивет. Ирĕклĕхе юратакан этемлĕхĕн чи хаяр тăшманĕ — Германи фашизмĕ пирĕн тăван çĕршыв çине килсе тăрăнчĕ. Совет çĕршывĕн ирĕклĕ çыннисене вăл нимĕç князĕсемпе баронĕсен чури туса хурасшăн, рабочисен класне, пирĕн хресченсене, пирĕн интеллигенцине вĕлерсе пĕтересшĕн, пирĕнтен Октябрьти революцире çĕнтерсе илнисене, эпир 24 çул хушши тăрăшса туса пынă пурнăçа, пирĕн ирĕклĕхе, чыслăха, пирĕн правăсене туртса илесшĕн.

Анчах вăл пулас çук! Совет халăхĕ гитлерла çăткăнсен кĕтĕвĕсене хирĕç питех те пысăк фронтра отечественнăй вăрçă туса пырать, тăшмана çĕмĕрсе тăкма мĕн кирлине пурне те Хĕрлĕ Çар валли туса парас тесе, хуçалăхпа строительствăн çав тери пысăк ĕçне малалла туса пырать. Пирĕн халăх танксемпе самолетсем тăвать, боеприпассемпе çар хатĕрĕсем туса кăларассине ӳстерет, тыла пур майсемпе те çирĕплетсе пырать. Совет çыннисем хăйсен вăйхăвачĕпе ресурсĕсене пĕтĕмпех тăшмана пĕтерсе тăкас ĕç валли мобилизацилеççĕ.

Пирĕн пĕтĕм халăх халĕ пĕр ĕмĕтпе пурăнать: тăшмана ним юлмиччен çапса çĕмĕрмелле! Халăхăн çак ĕмĕтне Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан заводри работниксем уççăн кăтартса панă. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва организацилесси çинчен «Правда» хаçатра пичетленĕ хăйсен çырăвĕнче вĕсем: «Октябрьти революци пулнăранпа XXIV çул тултарнине социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ çĕкленĕвĕпе, продукци туса кăларассине ӳстерни̇пе, фронта тăванла пулăшу парассине вăйлатнипе паллă тăвар!» тесе çыраççĕ. Паллах, вĕсен çак чĕнĕвне Мускав ĕççыннисем кăна мар, совет çĕршывĕнчи пĕтĕм ĕççыннисем, вăл шутрах Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксем те, пысăк кăмăлпа кĕтсе илĕç.

Мускаври подшипниксем тăвакан завод коллективĕ хăйĕн çине пысăк та кирлĕ обязательствăсем илнĕ: IV квартал планне срокчен—декабрĕн 24-мĕш тĕлне тултарма пулнă, октябрьте продукци туса кăларассине ӳстерме, плана пĕтĕмпех тултарма тата çар заказĕсене пурне те срокчен тултарма пулнă. Çар заказĕ пирĕн кашни предприятишĕн çирĕп задани пулса тăрать.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенчи социализмлă ăмăрту ĕç фронтĕнчи çĕнĕрен те çĕнĕ геройсене çуратать. Стахановецсен речĕсем ӳссе пыраççĕ, многостаночниксен, нумай профессипе ĕçлекенсен, двухсотниксен хисепĕ йышланса пырать. Канашри вагонсем юсакан заводри Быков юлташ ертсе пыракан клепальщиксен бригади сменăра нормăна 250—300 процент тултарса пырать. Слесарьсем Фадейчев, Павленко юлташсем, электросварщиксем Шашковпа Гаевский юлташсем уйăхри нормăна 220—250 процент таран тултарса пыраççĕ. Çакăн пек ĕçлекен бригадăсемпе стахановецсене халĕ кашни предприятирех, кашни колхозрах вуншарăн тĕл пулма пулать.

Пирĕн задача акă мĕнре: ĕçĕн стахановла меточĕсене массăсем хушшине сармалла, рабочисемпе работницăсене пурне те стахановла движенине явăçтармалла. Çапла ĕçлесе, кайрисене малтисемпе танлашма пулăшса пымалла.

Предприятире социализмлă ăмăрту мĕнле пынине хакланă чухне пуринчен малтан çакна шута илес пулать: юлса пыракансен хисепĕ нумай чакнă-и, ударниксемпе стахановецсен йышĕ нумай ӳснĕ-и, продукци кăларасси нумай ӳснĕ-и. Предприятире стахановецсен йышĕ ӳссе пытăр тесен, производство командирĕсен, парти, профсоюз, комсомол организацисен, инженерсемпе мастерсен, стахановецсемпе стахановкăсен çĕнĕ работниксене пур майсемпе те пулăшса пырас пулать. Вăрçă кунĕсенче юлса пыракансем пулмалла мар. Плана кашни отрасль, кашни предприяти, кашни цех, кашни смена, кашни станок тăрăх тултарса пымалла.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту миллионшар çынсене çавăрса илмелле. Парти организацийĕсем тивĕçлипе пуçарса пырсан, кашни коммунистпа кашни комсомолец ăмăртăва пуçарса ертсе пыраканĕсем пулса тăрсан, вĕсем хăйсен примерĕпе массăсене çĕнĕ çĕнтерӳсем тума ертсе кайсан, вăл ăмăрту нихăçанхи пек мар пысăк çитĕнӳсем тума пулăшĕ.

Октябрьти социализмлă аслă революцин XXIV-мĕш уявне фронтра та, тылра та пысăк çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илер!

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен сентябрĕн 30-мĕшĕнче пулса иртнĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ корреспондент господинсене нимĕçсем виçĕ держава конференцийĕн ĕçĕсене чĕнмесĕрех хутшăнни çине çавăрăнтарса пăхтарнă. Сентябрĕн 29-мĕшĕнче Берлинри радио çапла пĕлтерчĕ: Бивербрукпа Гарриман господинсем Совет Союзне чăн-чăн пулăшу пама май çуккине кура, «Совет Союзне теориллĕ йăпату та пулин пама» Мускава килчĕç,—терĕ. Нацист господинсем çак «теориллĕ йăпатун» боевой тата вĕçев пахалăхĕсем пуррине, пыра-пыра çапакан тата сиксе çуралакан калама çук пысăк вăй пуррине часах курса ĕненĕç.

Вервон Вартлетт, Шапиро, Карроли (Юнайтед пресс) тата Джордан («Ньюс кроникл») господинсем виçĕ держава конференцийĕн ĕçĕсене хăвăртрах та сарлакан çутатса пымалли майсем çинчен ыйтнисем пирки ответлесе, Лозовский юлташ çапла каланă: паллах, çапла çутатса пыни усăллă тата кирлĕ, анчах конференци ĕçĕсене çапла çутатса панă чухне комментарисем виçĕ держава конференцийĕн мĕнпур участникĕсем палăртса хунă чикĕсемпе рамкăсенчен тухмалла мар, тенĕ.

Шапиро господин: конференци ĕçĕсем тĕлĕшпе совет делегацийĕ хăйĕн хăштĕр шухăшĕсене каласа пама кăмăл тумасть-и?—тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла ответленĕ: пĕтĕм виçĕ делегацийĕ те Рузвельтпа Черчилль господинсен çырăвĕнче тата И. В. Сталин ответĕнче палăртса хунă ыйтусене татса парасшăн, пулса иртекен конференци тĕлĕшпе совет делегацийĕ кирек мĕнле те пулсан заявлени тума шутлас пулсан, паллах ĕнтĕ, çак заявленине çийĕнчех корреспондент господинсене пĕлтерĕç.

«Интерконтинент Ньюс» корреспонденчĕ Джаннета Вивер: Киевшăн пынă çапăçусем вăхăтĕнче Совет Союзĕ миллион ытла боец çухатнă, тесе Германири информаци бюровĕ пĕлтернине эсир мĕнле хаклатăр? тесе ыйтни пирки Лозовский юлташ çапла ответленĕ: Германири информаци бюровĕ Совет Союзĕн çухатăвĕсем çинчен хăйĕн пуçĕнчен шухăшласа кăларнă цифрăна темиçе кун хушшинчех виçĕ хут ӳстерсе янă. 350 пин çынна тыткăна илнĕ тесе малтан пĕлтернĕ цифрăна Совет Информаци Бюровĕ чикĕсĕр суя тесе сирсе янине шута илсен, çĕнĕ цифра вара—кивĕ суяна виçĕ хут ӳстерсе яни кăна пулса тăрать.

Аргентинăри «Критика» хаçатăн корреспонденчĕ господин Эрнандес çапла ыйтнă: нимĕçсемпе итальянецсен хаçачĕсем Совет Российинчи мир тенденцийĕсем çинчен пĕлтерни çине тата «Совет правительстви Германипе калаçмалли алăксене уçă тытать» тесе «Нью-Иорк таймс» хаçат сентябрĕн 28-мĕшĕнче пĕлтерни çине эсир мĕнле пăхатăр?—тенĕ. Ăна Лозовский юлташ çапла ответ панă: нимĕçсемпе итальянецсен хаçачĕсем мĕншĕн суйнине эпĕ ăнланатăп. Фашизмпа национал-социализма чарусăр демагоги çинче тата унтан та ытларах чарусăр суялăх çинче туса лартнă, çавăнпа вĕсем суймасăр тăма пултараймаççĕ. Суялăха национал-социализмран уйăрма çук. Анчах «Нью-Иорк таймс» пек пысăк хаçат мĕншĕн нимĕçсемпе итальянецсен суя пропагандин рупорĕ пулса тăнине эпĕ ăнланаймастăп вара.

ВКП(б) Мускав организаци активĕн пухăвĕ

Сентябрĕн 29-мĕшĕнче ВКП(б) Мускав организаци активĕн пухăвĕ пулса иртнĕ. Партиллĕ-политикăллă ĕç мĕнле тăни çинчен ВКП(б) Мускав Область Комитечĕпе Мускав Хула Комитечĕн секретарĕ А. С. Щербаков юлташ доклад туса панă.

— Гитлерла Германие хирĕç пыракан халăх вăрçи, — тенĕ Щербаков юлташ, — парти организацийĕсем умне партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас, парти организацийĕсен тата партин мĕнпур членĕсен активлăхне хăпартас задачăна кăларса тăратрĕ. Çав вăхăтрах партин хăшпĕр организацийĕсем «йăлтах фронта валли» текен задачăна пурнăça кĕртесси çине пĕр енчен кăна пăхаççĕ. Хуçалăх ыйтăвĕсемпе ĕçлесе, вĕсем партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас вырăнне, ăна йăвашлатса янă, парти пухăвĕсене пухма пăрахнă, массăсем хушшинчи политикăллă агитаци ĕçне япăхтарнă, парти ретне илес ĕçе вăйсăрлатнă, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсене пурнăça кĕртесси çинчен маннă.

Çав парти организацийĕсен руководителĕсем, партиллĕ-политикăллă ĕç — партин питех те пысăк ĕçĕ пулса тăнине тата вăрçă условийĕсенче вăл уйрăмах паха вырăн йышăнса тănине маннă, вĕсем пĕтĕм организациллĕ тата хуçалăхри ĕçе массăсем хушшинчи кулленхи политикăллă ĕçпе çыхăнтарса пыма кирлĕ тесе, Сталин юлташ кăтартса пани çинчен маннă.

Мускав организацийĕ умĕнче партиллĕ-политикăллă ĕçе сарса пырас тĕлĕшпе тăракан практикăллă задачăсем çинче тĕплĕн чарăнса тăрса, Щербаков юлташ çапла каланă: партиллĕ-политикăллă ĕçĕн тĕп никĕсне Сталин юлташ мĕнпур ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ йĕркепе урăхлатса çĕнетме кирли çинчен кăтартса панине хумалла, пĕтĕм ĕçе фронт интересĕсене тата тăшмана çапса аркатас задачăсене пăхăнтармалла. Парти организацийĕсен ĕççыннисене пирĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă пысăк хăрушлăх çинчен тарăннăн ăнлантарса памалла, эпир тăшмана çĕнтерессине иккĕлми шанса тăма массăсене вĕрентмелле. Çавăнпа та агитациллĕ ĕçе, уйрăмах сăмах вĕççĕн тăвакан агитацине, çак ĕçпе кашни ĕççыннине çавăрса илес шутпа, сарса пыни кирлĕ. Пирĕн çапла тумалла: кашни коммунист, вăл кирек ăçта пулсассăн та, яланах агитатор пулса тăтăр, ĕççыннисене хумхатаракан ыйтусем çинчен яланах хăюллăн ăнлантарса пама пултартăр.

— Вăрçă условийĕсенче, — тенĕ малалла Щербаков юлташ, — парти организацийĕсен хăйсен шалти ĕçĕсене уйрăмах аннăн туса пымалла, пухусене, активсене, парти комитечĕсен пленумĕсене вăхăтра та йĕркеллĕн туса ирттермелле. Парти организацийĕсен профсоюзсене, комсомола тата массăллă ытти организацисене ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла.

Доклада вĕçлесе, Щербаков юлташ çапла каланă: пирĕн çĕршыв, пирĕн халăх халыхи вăхăтра чи тискер, чи юнлă тăшмана хирĕç — гитлеризма хирĕç йывăр та хаяр кĕрешӳ туса пырать, — тенĕ. Çак кĕрешӳ мĕнле вĕçленесси пирĕн халăх организованно пулнинчен, çирĕп те чăтăмлă тата дисциплиннăллă пулнинчен чылай килет. Партин Мускав организацийĕ яланах пирĕн партин малти отрячĕ тата партин Центральный Комитечĕн шанчăклă тĕрекĕ пулса тăнă. Иккĕленӳ пулма пултараймасть, халĕ те, хаяр кĕрешӳ кунĕсенче, совет влаçне хӳтĕлесе хăвараассишĕн, пирĕн тăван çĕршывпа пирĕн халăхăн пуласлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳ кунĕсенче, Мускав большевикĕсем ирсĕр тăшмана çĕнтерессишĕн кĕрешекен паттăрсен малти речĕсенче пулĕç. Пирĕн большевиксен Центральный Комитет ертсе пынипе, пирĕн Сталин ертсе пынипе эпир çĕнтеретпĕр.

Щербаков юлташ докладĕ тăрăх прените ВКП(б) Ленински район комитечĕн секретарĕ Розанов юлташ, Мускав — Атăл каналĕн политотдел начальникĕ Левченко юлташ, ВКП(б) Егорьевск хула комитечĕн секретарĕ Белов юлташ, Ем. Ярославский юлташ, ВКП(б) Сокольники район комитечĕн секретарĕ Леонтьева юлташ, ВКП(б) Сталински район комитечĕн секретарĕ Исаченко юлташ, «Красная швея» фабрикăри партбюро секретарĕ Бодрова юлташ, ВКП(б) Куйбышевски район комитечĕн секретарĕ Шахова юлташ, ВКП(б) Мускав Комитечĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующи заместителĕ Поздеев юлташ тухса сăмахсем каланă.

А. С. Щербаков юлташăн юлашки сăмахĕ хыççăн, актив пухăвĕ резолюци йышăннă, çав резолюцире партин Мускав хулинчи тата Мускав облаçĕнчи организацийĕсене партиллĕ-политикăллă ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме хушса хăварнă.

Актив пухăвĕ хăйĕн решенийĕнче партин мĕнпур организацийĕсенчен XVIII партконференци решенийĕсене пурнăça кĕртессишĕн кĕрешĕве вăйлатма, предприятисен ĕç хăвăртлăхне ӳстерме, промышленноçа, транспорта, колхозсемпе совхозсене хĕллехи условисенче ĕçлемешкĕн кăтартуллăн хатĕрлесе çитерме ыйтнă. Актив, парти пухăвĕсене вăхăтра йĕркеллĕн туса ирттерме, коммунистсен производствăри малта пыракан вырăнне хăпартса пыма, стахановла движенине аталантарса пыма, ĕç дисциплинине пур майсемпе те çирĕплетсе пыма кирли çинчен кăтартса панă. Парти активĕ партин кашни членĕнчен хăйĕн уставри обязанноçĕсене — «массăсемпе çыхăнса тăрассине кулленех çирĕплетсе пымалла, ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе нушисем çине вăхăтра та тимлĕн çаврăнса пăхмалла, партире тăман массăсене парти политикин тата решенисен тĕп шухăшне ăнлантарса памалла» текен обязанноçсене пĕр пăркаланмасăр пурнăça кĕртсе пыма ыйтнă. Актив пухăвĕ хулари тата облаçри ертсе пыракан работниксене рабочисен тата колхозниксен пухăвĕсенче тăтăшах докладсем туса пама хушса хăварнă. ВКП(б) райкомĕсемпе горкомсен пĕрремĕш секретарĕсен хальхи вăхăтра ыйтусем тăрăх агитаторсене инструкцисем парас ĕçе хăйсен туса пымалла, агитаторсене хула, район умĕнче тăракан практикăллă задачăсем çинчен информаци парса тăмалла.

Пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентессине организацилес тата пурнăçа кĕртес ĕçре Оборона Наркомачĕн органĕсене пур енĕпе те пулăшса пырас тĕлĕшпе парти организацийĕсем умĕнче тăракан задачăна парти активĕ хăйĕн решенийĕнче уйрăмăн палăртса хăварнă. Актив пухăвĕ йышăннă решени партин мĕнпур организацийĕсенчен, партин кашни членĕпе кандидатĕнчен фронт нушисемшĕн хастаррăн ĕçлеме, çар ĕçне тĕплĕн вĕренсе пыма, хăравçăсемпе паникерсене пĕр хĕрхенӳсĕр тăрă шыв çине кăларса пыма, яланах тата пур çĕрте те массăсен пуçĕнче тăма, Ленин — Сталинăн аслă ĕçĕшĕн чĕререн парăнса кĕрешнине хăйсен ĕçĕсемпе кăтартса парса, хăйсем хыççăн массăсене ертсе пыма ыйтать. (ТАСС).

ВКП(б) Мускав Область Комитечĕн тата Мускав Хула Комитечĕн пĕрлешӳллĕ пленумĕ

Сентябрĕн 29-мĕшĕнче ВКП(б) Мускав Область Комитечĕн тата Мускав Хула Комитечĕн пĕрлешӳллĕ пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум пĕр ыйту—«Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем хатĕрлес, вĕсене Мускав хулине турттарас ĕç мĕнле пыни çинчен тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсене сыхласа усрама хатĕрленесси çинчен» сӳтсе явнă.

Пленум, хăшпĕр районсенче çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хатĕрлесе вĕсене Мускав хулине турттарас ĕç çителĕксĕр пынине палăртнă тата хатĕрлев енĕпе ĕçлекен организацисен, Малински, Осташевски, Уваровски, Ново-Петровски тата ытти хăшпĕр районсенчи партипе совет органĕсен ĕçĕсене критикленĕ.

ВКП(б) Мускав Область Комитечĕпе Мускав Хула Комитечĕн пленумĕ мĕнпур партипе совет, суту-илӳпе хатĕрлев организацийĕсен пысăк задачи—çĕр шăнтма пуçличчен çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хăвăртрах пухса кĕртесси, вĕсене Мускав хулине вăхăтра тата пĕтĕмпех турттарса килесси пулса тăрать, тесе паллă тунă. Пленум колхозсемпе совхозсенче пахча-çимĕçсене пухса кĕртес ĕçе вĕçлемелли срокĕсене çирĕплетнĕ: кишĕрпе чĕкĕнтĕре—октябрĕн 5-мĕш тĕлне, çĕрулмине—октябрĕн 10-мĕш тĕлне пухса кĕртмелле. Купăста пухса кĕртессине пур çĕрте те кăçалхи октябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр пуçламалла.

Пленум Мускав хулинчи тата облаçри партипе совет тата суту-илӳпе хатĕрлев организацийĕсене çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хĕллехи вăхăтра усрама хранилищĕсем, траншейăсем тата буртсем хатĕрлесе хурас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхма хушнă. (ТАСС).

Занятисем организованно пуçланчĕç

ИШЛЕЙ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче 10 сехетре çарĕçне вĕренме тивĕçлисем вĕренӳ пункчĕсене пухăнчĕç. Чи малтан вĕсене уйăрса подразделенисем тунă. Унтан икĕ сехет хушши «Пурне те çар ĕçне вĕрентес задачăсемпе вĕсен тĕллевĕ» темăпа политзанятисем ирттернĕ. Унтан икĕ сехет хушши стройпа çӳреме вĕрентнĕ, икĕ сехет хушши дисциплинарнăй уставпа паллаштарнă. Районра ултă вĕренӳ пункчĕ организациленĕ.

И. МАТВЕЕВ.

Ленинграда геройла хӳтлекенсем. Хĕрлĕ ялавлă Балтикăн моряксем Ленинград патне пымалли çулсем çинче нимĕç фашисчĕсене хирĕç геройла çапăçаççĕ. Сулахайран сылтăмалла: 2-мĕш статьяри старшина А. Трофимов, краснофлотецсем А. Буравцев тата В. Караулов. Балтиецсем штыксемпе тăвакан хăюллă атакăсенчен хăраса фашистла часçем пĕрре çеç мар каялла тарнă.

В. Тарасевич фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 30-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă. Вăйлă çапăçусем туса пынă хыççăн пирĕн войскăсем Полтава хулинчен тухса кайнă.

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче нимĕçсен 65 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 27 самолет пĕтнĕ.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче пирĕн чаçсем противникăн 268-мĕш пехотнăй дивизийĕн икĕ полкне çĕмĕрсе тăкнă. Вăйлă çапăçусем пулнă хыççăн нимĕçсен çапăçу хирĕнче 1.800 çын вилсе юлнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, 8 оруди, 15 пулемет, 5 миномет, грузовой тата çăмăл машинăсем, мотоциклсем, 4 радиостанци, çавăн пекех тата нумай винтовкăсем, снарядсемпе патронсем тытса илнĕ. Трофейăсене пухасси тата шута илесси малалла пулса пырать.

* * *

Ленинград патне пымалли çулсем çинчи çапăçусенче противник икĕ кун хушшинче 11 самолет çухатнă, вĕсенчен çиччĕ самолетне сывлăшри çапăçусенче персе ӳкернĕ тата тăваттă самолетне зенитнăй артиллерирен персе антарнă. Пирĕн самолетсен пĕр групи противникăн колоннисем çине ăнăçлăн тапăнса 9 танка, 11 зенитнăй орудине, 27 грузовой автомашинăна тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дахновский юлташăн артиллери подразделенийĕ фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пĕр кун хушшинче тăшманăн 12 ДЗОТ-не, пулеметсен 5 йăвине, тăшман чаçĕн штабне çĕмĕрсе тăкнă тата нимĕçсен колоннине салатса янă. Пирĕн орудисенчен персе, Германин 150 салтакĕсемпе офицерĕсене вĕлернĕ.

* * *

Одесса патĕнче 4 кун хушшинче Хура тинĕс флотĕнчи самолетсен групи противникăн 800 салтакĕсемпе офицерĕсене, 59 автомашинине тата 9 орудине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 12 самолетне персе ӳкернĕ. Летчик старший лейтенант Карасев нимĕçсен «Юнкерс-88» йышши бомбардировщикне таран меслечĕпе çĕмĕрсе ӳкернĕ.

* * *

Украинăн Германи войскисем тытса илнĕ хулисемпе ялĕсенче совет партизанĕсем фашистла ирсĕрсене хирĕç хаяр çапăçу туса пыраççĕ. Сентябрĕн 5-мĕшĕнче Днепропетровск облаçĕнчи Н. ялĕ патĕнче П. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕн разведчикĕсем нимĕç салтакĕсен группине аркатса тăкнă. Тĕттĕм пулнине усă курса, партизансем противник патне 15 метра çити çывхарса пынă та ун çине гранатăсем ывăтнă. Фашистсен 40 салтака çити пĕтнĕ. Сентябрĕн 6-мĕшĕнче çав отрядри партизансен групи нимĕçсем юсаса лартнă телеграф линийĕсен 30 ытла пралукĕсене касса татнă. М. юлташ ертсе пыракан отрядри партизансен групи нимĕçсен 12 салтакĕ ларса пыракан виçĕ резина лодкăна пĕтерсе тăкнă. К. ялĕ патĕнче партизансем фашистсен отрячĕ çине тапăнса пĕр офицера тата 9 салтака вĕлернĕ.

Николаев облаçĕнчи хуласенчен пĕрин çывăхĕнче С. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ Германи чаçĕн штабне çĕмĕрсе тăкнă. Николаевра партизансем хулари Петровский ячĕпе тăракан сада çĕр каçма вырнаçнă нимĕç салтакĕсене 30 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Ш. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ нимĕç салтакĕсен групи çине тапăннă. Пуçланса кайнă çапăçура отряд боецĕсем фашистсен 8 пулеметчикне тата 10 пехотинецне пĕтерсе тăкнă. Партизансем 3 пулемет, темиçе автомат, 12 винтовка тата 2 пин ытла патронсем тытса илнĕ.

* * *

Тыткăна лекнĕ нимĕç мотоциклисчĕн сумкинче нимĕçсен 11-мĕш мотополкри офицерĕн Эрнст Монесăн донесенине тупнă. Офицер фронтăн Хĕвеланăç енчи пĕр участокра нумай кун пулса иртнĕ çапăçăва çапла кăтартса парать: «Вырăссем пире пур енчен те çĕмĕреççĕ. Вырăссен артиллерийĕ нумай тата хальхи ытти хĕçпăшалсем пур, вĕсем боеприпассем çителĕксĕр пулнине пĕлмеççĕ. Эпир хамăр участокра пирĕн артиллери ытла та нумай тесе шутланăччĕ, ăна питех те шанса тăнăччĕ. Анчах та артиллери боеприпассем çук пирки час-часах чарăнса ларни паллă пулса тăчĕ. Салтаксем противник килсе тапăнассинчен хăраççĕ, çавăнпа кăнтăрла та, çĕрле те пĕр йĕркесĕрех персе тăраççĕ. Авиацие пĕрле кĕрешесси пăсăлчĕ. Вырăс летчикĕсем вара пирĕн пуçсем çинче пур вăхăтра та вĕçеççĕ, çĕр çумĕпе аялтан вĕçсе пирĕн çине пулеметсенчен переççĕ. Эпир вуникĕ кун йывăр условисенче пулнă хаяр çапăçăва тӳссе ирттертĕмĕр. Шыв тулнă окопсенче пĕрмаях тăнине кура, чылай салтаксен ӳчĕсем çине тӳсме çук ыраттаракан тата асаплантаракан çăпансем тухнă. Салтаксем çакăн пек положенире хăйсем тарăхса çитнине пĕлтереççĕ».

* * *

Совет нефтяникĕсем планран ирттерсе пиншер тонна нефть кăлараççĕ. Азербайджанри тата Грозныйри неф-

Малалли 4-мĕш страницăра

Тĕнчери çамрăксем—гитлеризма хирĕç кĕрешĕве тухăр!

ÇАМРĂКСЕН ФАШИЗМА ХИРĔÇЛЕ МУСКАВРИ МИТИНГĔ

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче Мускавра Союзсен Çуртĕнче çамрăксен фашизма хирĕçле митингĕ пулса иртнĕ. Колоннăй залри трибуна çине пĕрин хыççăн тепри çамрăк ученăй тата моряк, сталевар тата танкист, комбайнер тата студент, летчик тата партизан хăпарнă. Вĕсем кунта çапăçу хирĕсенчен, заводсенчен, колхозсенчен, ВУЗ-сенчен, чугунçул деповĕсенчен килнĕ. Хăйсен аслă тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр парăннă мухтавлă та хăюллă çамрăксем!

Митинга Совет Союзĕн Геройĕ **Евгений Федоров** уçнă. Хăйĕн сăмахĕнче Англипе Америкăри çамрăксене чĕнсе каланă чухне вăл англичан чĕлхипе калать.

— Юлташсем! Совет çĕршывĕнчи яшăсемпе хĕрсем! Çапăçури юлташсем тата пĕтĕм тĕнчери пирĕн тăвансем! Тĕнчери мĕнпур çамрăксене хăйсен çĕршывĕн чыслăхĕ, ирĕклĕхĕ тата никама пăхăнмалăхĕ камшăн хаклă, çавсене пурне те фашизма хирĕç кĕрешме хăйсен вăйĕсене пухмашкăн, этемлĕхĕн ылханлă тăшманне хирĕç пĕрлĕхлĕ фронтпа тухмашкăн чĕнме тесе, эпир çакăнта пухăнтăмăр.

Пирĕн ăру умне пысăк хăрушлăх килсе тухрĕ. Эпир мĕне юрататпăр та хаклатпăр, эпир мĕншĕн тăрăшатпăр—çавсене пурне те фашистла ирсĕрсем пĕтерсе тăкаççĕ.

Пирĕн халăх, пирĕн совет çамрăкĕсем хальхи вăхăтра фашистла варвăрсене хирĕç хаяр та вăйлă çапăçусем туса пыраççĕ. Пирĕнтен кашниех хамăрăн тăван çĕршыв валли йăлтах пама хатĕр. Чура пулса пурăниччен, вилни лайăхрах, — çапла калаççĕ пирĕн яшăсемпе хĕрсем.

Сталин юлташ пире кĕрешĕве чĕнчĕ. Эпир çĕнтеретпĕр тесе ăна тупа тăвар! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур кĕтессенчи çамрăк çынсем! Юнлă маньяк Гитлер пирĕн çĕршывпа Англие хирĕç çеç мар, Европăри халăхсене хирĕç çеç мар çĕкленсе тухрĕ, вăл пĕтĕм тĕнчене хирĕç вăрçать. Нимĕç фельдфебелĕ икĕ миллиард çынсен мăйĕ çине хăпарса ларасшăн.

Пирĕн валли, çамрăксем валли фашизм мĕн илсе килни камшăн паллă мар-ха! Çунтарса янă хуласемпе ялсен кĕлĕ, асаплантарса вĕлернĕ жертвăсен юнĕ таварма чĕнет.

Кĕрешӳри тăвансем, Великобританин хăюллă çамрăкĕсем! Эпир хĕрӳллĕн саламланине йышăнăр! Чи йывăр минутăсенче эсир çирĕп пулнине, эсир хăюллине тата çĕнтерессишĕн вăйлă шухăш-кăмăлпа тăнине эпир пĕлетпĕр тата çавăншăн сире хисеплетпĕр. Фашистсене тинĕсре те, сывлăшра та тата çĕр çинче те вăйлăраххăн çапăр!

Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çамрăк борецсем, Гитлер оккупациленĕ çĕршывсенчи çамрăк партизансем! Эсир хăвăрăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн кĕрешетĕр. Эпир сирĕн хăюллă ĕçӳсем çинчен пĕлетпĕр тата вĕсемпе савăнатпăр. Фашистсене малашне те пĕтере-пĕтере пырăр, вĕсен мĕнпур мероприятийĕсене хирĕç саботаж тăвăр, фашистсен тылне аркатăр.

Аслă Америка халăхĕн çамрăкĕсемпе хĕрĕсем! Гитлеризма хирĕç кĕрешекен çарсене мĕнпур средствăсемпе пулăшса пырăр. Çакна асра тытăр та пĕлсе тăрăр: фашистсемпе килĕшӳ пулма пултараймасть. Гитлерла Германие йăлтах аркатса тăкни çеç сире валли мирлĕ ĕç, ирĕклĕх тата никама пăхăнмалăх туса парать.

Пирĕн умра пĕтĕмĕшле тăшман. Эпир мĕнпур çамрăксене — вĕсем пурлăх тĕлĕшĕнчен мĕнлине, политика çине мĕнле пăхнине, мĕнле тĕне ĕненнине тата мĕнле расăран тухнине пăхмасăрах, тăшмана хирĕç антифашистла пĕрлĕхлĕ фронт тума чĕнетпĕр.

Тĕнчери мĕнпур çамрăксем, нацизма хирĕç çĕнтерӳллĕ кĕрешĕве тухăр! Хамăрăн тĕрĕслĕхлĕ ĕçшĕн, кĕрешӳпе çĕнтерӳ патне малалла! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. «Пирĕн аслă туса, учителе Сталин юлташа «урра!» тесе кăшкăраççĕ).**

Трибуна çинче Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн подводнăй лодка командирĕ **Василий Кульбакин.** Вăл Хĕрлĕ ялавлă Балтика морякĕсенчен тата Ленин хулинчи хĕçпăшалланнă çамрăксемпе хĕрсенчен салам калать.

— Халăх пире çапла каларĕ, — тет вăл, — «Юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăç, анчах Ленин хулине ан пар». Эпир хамăрăн тăван çĕршыва, хамăрăн халăха çапла ответлетпĕр:

Памастпăр!

Эпĕ халь çеç Ленинградран килсе çитрĕм. Çĕр çинче ун йĕри-тавра окопсемпе канавсем туса çавăрăннă. Тинĕсре пирĕн карапсем тăшманран сыхласа тăраççĕ, сывлăшра пирĕн самолетсем хураллаççĕ. Пăшал йăтма пултаракансем кашниех кĕрешӳ постне тăнă.

Мана Ленинградри çамрăксемпе краснофлотецсем тата боецсем мухтавлă черноморецсене — Одессăна хӳтлекен геройсене хĕрӳллĕ салам калама хушса ячĕç.

Юлташсем, Железняк матрос çапăçнă пекех çапăçăр!

Британи королевстви флочĕн паттăр морякĕсем тинĕссемпе океансем урлă хыттăн чăмăртаççĕ сирĕн аллăрсене, Балти тинĕс флочĕн морякĕсем. Британипе Совет Союзĕн флочĕсем пĕр-пĕрнипе таччăн çыхăнса фашистла разбойниксене пĕтерсе тăкĕç.

Тусăмсем, митинг участникĕсем! Морякăн сăмахĕ, ленинградецăн сăмахĕ— çирĕп сăмах. Эпир хамăрăн тĕрĕслĕхшĕн пыракан кĕрешӳре каялла чакас çук! Алă винтовкăна чăмăртама пултарнă чухне, кăкăрта чĕре тапса тăнă чухне тăшман Ленин хулине пырса кĕреймĕ! **(Шавлăн алă çупаççĕ. «Ленин хулинчи геройла çамрăксем сывă пулччăр!» тенĕ сасă илтĕнсе каять. Тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ).**

Малалла «Серп и молот» заводри çамрăк сталевар **Кирилл Чирков** тухса сăмах каланă:

—Эпир çак хаяр кунсенче уйрăмах пысăк юратупа, тулли кăмăлпа хумханса калакан чи хаклă, чи таса виçĕ ăнлану пур: çакă вăл — тăван çĕршыв, ирĕклĕх, чыслăх...

Нимĕç фашисчĕсем пирĕн çĕршыва хăратса тăраççĕ, вĕсем пирĕн çамрăклăха туртса илесшĕн. Çамрăксемшĕн, пирĕншĕн кашнишĕн нимĕç фашизмĕнчен хăрушăрах та ылханлăрах тăшман урăх çук. Пирĕн тантăшсем нумайăшĕсем фронтра гитлерла бандитсене хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçаççĕ. Ыттисем хăйсен тылри ĕçĕсемпе çĕнтерӳ вăхăтне çывхартаççĕ.

Европăри çамрăк рабочисем, Гитлер сире хăвăра валли хăвăрăн аллăрсемпех чуралăх сăнчăрне туптаттарать, çав сăнчăрпа вăл сирĕн тапланса арканнă çамрăклăха чуралантарать. Тăшман мăшкăлласа ирсĕрленĕ тăван çĕршывăрсем умĕнчи хăвăрăн тивĕçлĕхе ан манăр. Нимĕçсем тытса илнĕ предприятисенче ĕçе пăсса пырăр. Халăхсене вĕлермелли тата пусмăра чикмелли тупăсем тăвас ĕçе сăтăрласа пырăр. Фашистсемшĕн ĕçлекен станоксене хăвăрăн аллăрсемпе чарăр, çĕмĕрĕр! Эпир, Совет Союзĕнчи çамрăк рабочисем, хамăрăн халăхăн вăйĕсене фронтра та, тылра та ӳстерсе пырăпăр, фашизм валли татăклă вилĕм хатĕрлĕпĕр.

Совет Союзĕн Геройне **Иван Прошин** танкиста зал алă çупса кĕтсе илнĕ.

— Эпир — совет халăхĕн воинĕсем, — тет вăл,—тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр, пĕтĕм чĕререн юратма, унăн тăшманĕсене хаяррăн кураймасăр тăма мĕн ачаранах вĕреннĕ. Гитлерла помещиксем патĕнче батракра пурăниччен, ирĕклĕн вилни лайăхрах — çапла пирĕн çамрăксен девизĕ. Эпир çĕнтеретпĕр, мĕншĕн тесен пирĕн аслă халăх пурăнать, малалла та пурăнĕ.

Прошин Хĕрлĕ Çарти çамрăк боецсен паттăр кĕрешĕвĕн эпизочĕсем çинчен каласа парать.

— Çакăн пек юлташсемпе,—тет вăл, — вутта та, шыва та кĕретĕн. Эпĕ аманнă пулнă, халĕ суран тӳрленсе çитет ĕнтĕ. Алăсем çапăçу ĕçне ыйтаççĕ. Строя таврăнас куна тӳсеймесĕр кĕтсе тăратăп.

Нумаях пулмасть эпĕ Гоголĕн «Тарас Бульба» повеçне тепĕр хут вуласа тухрăм. Ватă казакăн сăмахĕсене вуланă чух манăн хумханнипе сывлăш питĕрĕне-питĕрĕне ларчĕ. Пĕтĕм тĕнче илтмеллех кăшкăрас килет:

«Батько, пороховницăсенче тар пур-ха! Пирĕн халăх вăй-хăвачĕ çирĕп, пирĕн аслă тăван çĕршывăн ирĕклĕ те хăватлă ывăлĕсене фашистла орда хуçаймĕ!»

Пирĕн хурçă Нарком, пирĕн аслă полководец, пирĕн батько Сталин, илсе кай пире, хăвăн ывăлусене, çапăçăва! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Трибуна çинче танкиста комбайнерка-стахановка **Клавдия Копненкова** улăштарать.

— Манăн хаклă землякĕсем!—тет вăл.—Англипе Америкăри хресчен хĕрĕсем! Фашистсем тытса илнĕ çĕршывсенчи хĕрсем! Эпир, совет хресченĕсем, хамăрăн мĕнпур халăхпа пĕрле нумай çулсем хушши хамăр хуçалăха аталантарса пытăмăр. Пирĕн çĕршыв чечекленсе сарăлчĕ, совет хресченĕсем хăйсен телейне, хăйсен пуян пурнăçне курчĕç.

Пурăнмалла та савăнмаллаччĕ халĕ пирĕн, анчах тăшмана хăйĕн çăткăн та хапсăнчăк чунĕ канăç памасть, кышлать. Пирĕн çине фашистла саранча вĕçсе тапăнса килчĕ. Таптаççĕ ирсĕрсем пирĕн çĕрсене, хĕрарăмсемпе ачасене асаплантараççĕ, хĕрсене ирĕксĕрлесе пусмăрлаççĕ, мирлĕ пурăнакан çынсене вĕлереççĕ. Пирĕн хресченсем тар юхтарса тунине пурне те выçă анчăксем туртса илеççĕ, çынсене çукка хăварса тĕнче тăрăх яраççĕ.

Çаратса, ишĕлтерсе пĕтернĕ Югославири, Грецири, Польшăри тата ытти çĕршывсенчи хресченсем нимĕçсен пусмăрĕ айĕнче мĕнле асапланнине эпир пĕлетпĕр. Пире те Гитлер çавăн пек чурасем туса хурасшăн.

Анчах тискер хашкăрсем пирĕн çĕрсем тăрăх нумаях хăстарса çӳреймĕç. Мĕнпур совет халăхĕ фашистсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленчĕ, пирĕн вăй-хăват кунран-кун ытларах çирĕпленсе пырать, çав вăй-хăвата никам та, нихăçан та хуçаймĕ!

Малалла Югослави çамрăкĕсен представителĕ **Велимир Влахович** трибуна çине тухать. Вăл хăйĕн сăмахне серб чĕлхипе калать.

— Мĕнпур тĕнчери яшăсемпе хĕрсем! Эпĕ кунта сире Югославири çамрăк партизансенчен — хамăрăн тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çамрăк сербсенчен, хорватсемпе словенецсенчен салам калама килтĕм.

Паян Югослави çамрăкĕсен куçĕсем Мускав еннелле тинкерсе пăхаççĕ. Çак самантра Копаоник, Златибор, Дормитор, Велибит тăвĕсем хушшинче çамрăк патриотсем радиоприемниксем умне лăпчăнса ларнă та, тĕрĕслĕхпе чăнлăха пирĕн халăхăн нумай асап курнă чĕрисем патне çитерес тесе, кашни сăмаха асра тытса юлма тăрăшаççĕ.

Эпĕ кунта боевой донесени илсе килтĕм. Икĕ уйăх хушшинче кăна Югослави партизанĕсем 200 кĕпере çĕмĕрнĕ, боеприпассемпе провиантсем усракан 400 склада взрыв туса аркатнă тата 17 поезда тăвайккинелле вăркăнтарнă, 10.000 фашиста яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

Антив, çакă пысăк мар донесени пирĕн Хĕрлĕ Çарăн çапăçăвĕсем çинчен калакан сводкăна кĕрет. Юлташсем, пирĕн Хĕрлĕ Çар тесе эпĕ ăнсăртран мар каларăм, мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çар фашизм пусмăрлакан мĕнпур халăхсен ирĕклĕхĕшĕн кĕрешет.

Юншăн—юн, вилĕмшĕн—вилĕм! Акă эпир тискер фашистсене хирĕç паракан ответ!

Çамрăк грексем, французсем, голландецсем, норвежецсем, хамра ирĕклĕх туртăмĕ пĕтсе ларман, хамра тăшмана кĕрешӳре таварас туйăм çунса тăрать—пурте!

Çамрăк болгарсем! Гитлер тата вăл тара тытнă сутăнчăк политиксем сире тăвана тăван вĕлермелли вăрçа тĕртсе кĕресшĕн. Çамрăк болгарин, эсĕ ху славянин пулса тăнине, санăн нимĕçпе çул пĕр маррине ан ман. Санăн вырăн пирĕн ретре, тăшмана хирĕç кĕрешекен славян çамрăкĕсен ретĕнче.

Трибуна çинче—Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан университетăн студенчĕ, истребительнăй батальон боецĕ **Орест Шевцов.** Унăн сăмахĕсем хумханнуллăн янăраççĕ:

— Пирĕншĕн, çамрăк интеллигентсемшĕн, фашистсем уйрăмах ылханлă. Ăçта нимĕçсем иртсе пынă, унта çĕршер музейсене, библиотекăсене, шкулсене, аваллăх памятникĕсене аркатса хăварнă. Европăри университетсене нимĕçсен дивизийĕсем йышăнса тăраççĕ. Французсен çĕршер ученăйĕсене тĕрмесене хупнă. Фашистла варварсем Краков университетĕнчи профессорсенчен тискеррĕн мăшкăлласа пĕтернĕ. Фашистсем Польша ученăйĕсенчен хăйсене валли лакейсем туса хума хăтланчĕç, анчах та таса кăмăллă поляксем пусмăрçăсемшĕн ĕçлессинчен пăрăнсан, вĕсене тĕрмене хăваласа хупрĕç. Европăри студентсене çулсем çинче чул ваттараççĕ, нимĕç салтакĕсем валли окопсем чавтараççĕ.

Мĕнпур тĕнчери туссем—студентсем, малалла вĕренсе пыраканнисем те, гитлеровецсем университетсенчен хăваласа кăларнисем те, хăвăрăн халăхăрсен чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешĕр! Прагăри чаплă университета ишĕлтернĕ. Студентсене нимĕçсем концлагерьсене хăваласа каяççĕ. Анчах та чехсем парăнмаççĕ. Эпĕ фашизма хирĕç паттăррăн кĕрешекен 20 çулти студентăн Ян Смудекăн ятне мухтанса тулли кăмăлпа асăнатăп, вăл хăйĕн халăхне чуралантаракансене хирĕç хастаррăн кĕрешет.

Европăри тата Америкăри студентсем, сирĕншĕн мĕн хаклă, пирĕншĕн те çавах хаклă, дикарьсене культурăран мăшкăллама ирĕк памăпăр!

Хура-хăмăр чумана эпир пĕтерсе тăкатпăр. Вăхăт çитĕ, эпир татах хамăрăн университетсене таврăнăпăр, кĕнекесене уçăпăр та вĕренĕве малалла тăсăпăр. Залпсен кĕрлевĕнче, çапăçусен тĕтĕмĕнче эпĕ Пушкин сăмахĕсене тепĕр хут аса илетĕп:

«Хĕвел сывă пултăр, тĕттĕм тĕп пултăр!»

Трибуна çине орденоносец **Рубен Руис Ибаррури** хăпарать. Вăл испанла калать. Унăн хавхаланнуллă сăмахне Пысăк театрти артистка **Ольга Лепешинская** куçарса парать:

— Европăпа Америкăри çамрăксем! Ирĕклĕхшĕн пыракан гигантла кĕрешӳ фронтĕнчен чĕнсе калатăп эпĕ сире. Кунта, совет çĕрĕсем çинче, паян Совет Союзĕнчи çамрăксен кунçулĕ пирки кăна мар ĕç татăлать. Кунта мĕнпур тĕнчери çамрăк ăрăвăн кунçулĕ пирки ĕç татăлать. Шухăшласа та иккĕленсе тăма вăхăт çук. Фашистла çынвĕлеренсем çапнипе ӳкнĕ миллионшар жертвăсем хăйсемшĕн таварма çапăçăва чĕнеççĕ.

Эпĕ Испанин республикăллă çарĕн речĕсенче тăрса çапăçнă. Халĕ Хĕрлĕ Çар речĕсенче тăрса çапăçатăп. Тĕнчере халиччен пулнă кĕрешӳсенчен чи аслă кĕрешĕве—тĕрĕслĕхшĕн, этем телейĕшĕн пыракан кĕрешĕве хутшăннишĕн эпĕ мухтанатăп, эпĕ телейлĕ.

Эпĕ—испанец, манпа юнашар тăрса вырăс, грузин, белорусс, казах, украинец, таджик çапăçаççĕ. Кам хăйне валли телейпе ирĕклĕх çĕнтерсе илес тет, пурте пирĕнпе юнашар тăрăр!

Çак кĕрешĕве хутшăнасси—ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çамрăк ăрăвăн тивĕçлĕхĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи, Латинла Америка республикисенчи çамрăксем! Сирĕн çурталла фашистла ирсĕр шăвать. Совет Союзне пулăшни—вăл Америка оборонине çирĕплетни, Америкăна гитлерла хăрушлăхран хăтарни пулса тăрать.

Çамрăк испанецсем! Хăвăра вăрçа туртса кĕртме ирĕк ан парăр!

Фашистла пусмăрлăх айĕнче асапланакан Европăри çамрăксем, хăвăра ирĕклĕхе кăларассишĕн кĕрешĕве тухма вăхăт çитрĕ.

Тусăмăрсем, паттăрла çĕнĕ ĕçсемпе çĕнтерӳсем патне малалла!

Митинга пухăннисене Хура тинĕс флочĕнчи морякĕсенчен 2-мĕш статьяри старшина **Георгий Надольный** хĕрӳллĕ салам калать.

— Эпир, Хура тинĕс флочĕнчи çар морякĕсем,—тет вăл,—фашистла ирсĕрсене тинĕсре, çĕр çинче тата сывлăшра хаяррăн пыра-пыра çапатпăр. Пирĕн паттăр черноморецсем, Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе пĕрле, Одесса патне пымалли вырăнсене фашистла бандитсемшĕн çăва шăтăкĕ туса хучĕç. Хура тинĕс флочĕн карапĕсем Хура тинĕсре хуçа пулса тăраççĕ.

Фашизма хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче пуçĕсене хунă хамăрăн чи лайăх юлташсен юнĕпе тупа тăватпăр: фашистсене пĕр хĕрхенмесĕр, пуçĕпех пĕтерсе тăкиччен пыра-пыра çапăпăр! Мĕнпур тĕнчери çамрăксене эпир фашизма хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăйсен речĕсене татах та таччăнрах пĕтĕçтерме чĕнетпĕр. Пурте фронта валли! Юншăн çăткăнланакан, халăхсен телейĕпе ирĕклĕхне хăратса тăракан фашистла ордасене çĕнтерме мĕн кирлипе пурне те парар!

Сывă пултăр мĕнпур çĕршывсенчи çамрăксен фашизма хирĕçле пĕрлĕхлĕ фрончĕ! Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç, çамрăксен ашшĕпе тусĕ аслă Сталин! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Гамбургран килнĕ çамрăк антифашист **Ганс Мале** сăмах илет. Хăйĕн тăван чĕлхипе вăл Германири çамрăксене чĕнсе калать.

— Нацистла пуçкасакансем сире, Германири çамрăксем вăрçăра вилме çуралнă, тесе калаççĕ. Хĕвелтухăç фронтĕнче, Польшăра, Норвегире, Голландире, Францире, Балканра, Çурçĕр Африкăн пушхирĕсенче Германин миллионшар салтакĕсем пĕтнĕ ĕнтĕ. Германи халăхĕнчен чăн-чăн сухатусене пытарса, Гитлер хăрушла çапăçу вутне çĕнĕрен çĕнĕ дивизисем хăваласа килсе чикет. Гитлер—Германири çамрăксене вĕлерекен ирсĕр.

Германин çамрăк салтакĕ, сан умăнта икĕ çул: е Гитлершĕн—вăрçăшăн, е Гитлера хирĕç—миршĕн. Ытти халăхсене хирĕç преступленисем тума Гитлера пулăшса, эсĕ унăн юнлă тискер ĕçĕсемшĕн ху çине те ответлăх илетĕн.

Эпĕ, Германи халăхĕн ирĕклĕн шухăшлакан ывăлĕ, сире, Германири çамрăксене калатăп: эсир пур çĕрте те чи курайман çынсем, тĕнчери чи тĕксĕм сăн-сăпатлă çынсем пулса тăтăр. Эсир хăвăра хăвăр намăслă та ылханлă ятпа витрĕр.

Германири çамрăксем, сирĕн çав намăс та ылханлă ята хăвăр çирен тасатма май пур, эсир ăна тасатмалла та. Гитлерпа унăн шайккине хирĕç тăрăр, Германине Гитлерпа нацизмран ирĕке кăларассишĕн кĕрешĕр!

Германин çамрăк салтакĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсем çине ан пер! Хăвăн хĕçпăшална нацистла офицерсене хирĕç, сана вилĕм патне хăвалакансене хирĕç çавăр. Хĕрлĕ Çар енне куç. Акă сана хăвăн тăванусем патне, арăмупа ачусем патне киле таврăнма май паракан çул.

Фабрикăра, заводра ĕçлекен нимĕç хĕрĕ! Эсĕ телейлĕ пурăнас тетĕн пулсан, эсĕ вăрçа хирĕç пулсан, вăрахăн ĕçле, çар снаряженийĕсем тăвассине мĕнпе пултаран, çавăнпа пуринпе те сăтăрласа пыр.

Германипе унти çамрăксен çăлăнăçĕ—Гитлера пĕтернинче! Çакна тума чĕнетĕп эпĕ сире, Германири тӳрĕ кăмăллă çамрăксем!

Трибуна çинче — ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн секретарĕ **Николай Михайлов.**

— Юлташсем, тусăмсем!—тет вăл. — Пирĕн умма йывăр хăрушлăх тухса тăчĕ. Совет çĕрĕсем çине тискер те хĕрхенӳсĕр тăшман тапăнса кĕчĕ. Совет çĕршывне курайман ăншăртлăхпа сухăрланнă гитлерла тискер-кайăксем, пирĕн халăха чуралантармалли тата пĕтермелли хăйсен шуйттанла ирсĕр планне пурнăçа кĕртме хапсăнса, мирлĕ пурăнакан çынсене, хĕрарăмсене, ачасене ватă тата чирлĕ çынсене пĕр хĕрхенӳсĕр асаплантарса вĕлереççĕ. Çав ирсĕрсем тунă тискер ĕçсен вĕçĕ-хĕррийĕ те çук.

Совет çамрăкĕсем хамăрăн мĕнпур халăхпа пĕрле юратнă тăван çĕршыва хӳтлеме хăюллăн та паттăррăн çĕкленчĕç. Пирĕн çамрăксем пĕлеççĕ: фашистла çынçиенсен аллине чуралăха лекиччен, çапăçу хирĕнче чыслăн вилни лайăхрах.

Халăх хушшинчен кунран-кун çĕнĕ геройсем çĕкленсе тухаççĕ. Паян вĕсем вуншар пинĕн, ыран вĕсем çĕршер пинĕн пулĕççĕ.

Вăрçă тени вăл—вăрçах. Умра пире татах та пысăк йывăрлăхсем кĕтсе тăраççĕ. Кун çинчен эпир пĕлетпĕр, мĕншĕн тесен пирĕн правительство пире çăмăл вăрçă туса пама пулман. Хаяр хăрушлăх çине эпир куçа хупмасăр та пĕр шикленмесĕр тӳррĕн пăхатпăр. Çĕнтерӳ кунĕ çитессине эпир шанса тăратпăр, çав куна эпир орудисен кĕрешĕвĕпе çапăçусен тĕтĕмĕ витĕр куратпăр.

Пирĕн тăван çĕршыв, пирĕн правительство, пирĕн юратнă Сталин юлташ çирĕм виçĕ çул хушши пире, хăйсен тăван ачисене пăхса ӳстернĕ пек, çитĕнтерсе пынă. Тăван çĕршыв пире пурне те панă, вăл пире чăн-чăн пурнăç çулне кăтартса панă, тăван çĕршыв умĕнчи хамăрăн тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртмешкĕн яланах хатĕр тăма вĕрентнĕ.

Эпир çак тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртетпĕр.

Мĕнпур совет çамрăкĕсем хамăрăн тăван çĕршыв чыслăхĕпе ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне юлашки юн тумламĕ юлмиччен, татăклă çĕнтерӳ тăвиччен хӳтлĕç тесе, паян тупа тăвар!

Эпир тупа тунине хамăрăн пĕтĕм çĕршыв, Англири, Америкăри тата фашизм оккупациленĕ çĕршывсенчи мĕнпур çамрăксем илтчĕр! Ирĕклĕхе юратакан тĕнчери мĕнпур çамрăксем пирĕн пĕр-пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç — Германи фашизмне хирĕç пĕрлĕхлĕ хастарлăхпа çĕкленччĕр!

Совет çамрăкĕсем! Йăлтах фронта валли, йăлтах çĕнтерӳ валли!

Пирĕн çулпуç, пирĕн полководец, тăван атте Сталин юлташ, ертсе кай пире ылханлă тăшмана хирĕç çапăçăва! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ. «Сталин юлташа—çамрăксенчен урра!» тенĕ сасă янăраса каять).**

Медсестра **Катя Новикова** тухса сăмах калать:

— Эпĕ фронтран килтĕм. Боеца пулăшу парасси, унăн пурнăçĕпе сывлăхне сыхласси—вăл питĕ пысăк телей. Эпир тăшман миномечĕсемпе артиллерийĕн вут-çулăмĕ айĕнче шуса çӳренĕ, аманнисен суранĕсене çыха-çыха янă. Пирĕн тĕлте шрапнель çурăла-çурăла кайнă, пулясем шăхăрса тăнă. Анчах та унта хăвăн çинчен шухăшламастăн, аманнисене çăлассси çинчен кăна ĕмĕтленетĕн! Йăнăшнине илтетĕн, чĕре тӳсеймест: вара вучĕ те вут мар — боец патне шăватăн.

Мана кăштах амантрĕç, анчах эпĕ ĕнтĕ тӳрленсе çитрĕм те. Манăн пĕр ĕмĕт кăна—татах малти позицине лекесси. Фашистла ылханлă йытăсене çĕмĕрмешкĕн мĕнпе пулăшма пултаратăп, çавăнпа пулăшатăп!

Эпĕ мĕнпур комсомолецсене винтовка, пулемет, граната тыткаламашкăн хăвăртрах вĕренме чĕнетĕп. Хĕрсем! Санитари ĕçне хăвăртрах вĕренĕр.

Юлташсем, эпир çĕнтеретпĕр! Эпир гитлерла заразăна пĕтерсе тăкатпăр!

Кун хыççăнхи оратора—**Владимир** партизана пĕтĕм зал тăвăллăн алă çупса кĕтсе илет.

Вăл митинга пухăннисене Полесьепе Смоленщинăри çамрăк партизансенчен хĕрӳллĕ салам калать, фашистла варварсен хăйсем тытса илнĕ совет районĕсенчи тискер ĕçĕсем çинчен каласа парать.

— Ăçта фашистсем иртсе пынă, унта пушарсем, çарату, тискер ĕçсем, ирĕксĕрлесе пусмăрланисем. Анчах та эпир, партизансем, фашистсене çав тискер ĕçсемшĕн таварсах пыратпăр. Юншăн—юн, вилĕмшĕн — вилĕм—акă эпир, партизансем, ылханлă ирсĕрсене паракан ответ.

Полесьепе Смоленщинăри çамрăк партизансем Украинăри, Прибалтикăри партизансене, пирĕн кĕрешӳри тăвансене—Польшăри, Югославири, Норвегири тата фашистсем тытса илнĕ ытти çĕршывсенчи партизансене салам калама хушса ячĕç мана.

Юлташсем—Хĕрлĕ Çар боецĕсем, юлташсем—партизансем, фашистсене пĕр хĕрхенӳсĕр çапăр, çав икĕ уралла тискер-кайăксене пуçĕпех пĕтерсе пырăр, вĕсене ыйхă та, канăç та ан парăр!

Юлашкинчен Совет Союзĕн Геройĕ летчик **Виктор Талалихин** тухса сăмах калать. Вăл хăйĕн сăмахне аслă писателĕн Максим Горькийĕн сăмахĕсемпе пуçлать.

— Алексей Максимович Горький пĕринче çапла каланă: «Этем пулса тăни—çĕр çинче питех те паха должность!» тенĕ.

Эпĕ кун çумне çапла хушса каласшăн: çамрăк совет çынни пулса, вилĕм çине куçа хупмасăр тӳррĕн пăхса, икĕ уралла ирсĕр тискер-кайăксене, тӳрĕ кăмăллă çынсене пурăнма чăрмантаракансене, пĕтерсе пыни—çĕр çинче питех те паха должность пулса тăрать.

Пирĕн совет пилочĕсем тăшмана хирĕç хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр çапăçма тухаççĕ, фашистсен çăханĕ çĕре чул пек персе антăр тесе, кирлĕ чухне вĕсем тăшмана таран меслечĕпе пырса çапаççĕ. Таран меслечĕпе пырса çапасси пирĕн хулленхи ĕç пулса тăчĕ. Çакă вăл вырăс авиацин çапăçу меслечĕ.

Фронтри çамрăк тусăмсем! Эпĕ хамăрăн мĕнпур çамрăксене фронтри çамрăксем тетĕп, мĕншĕн тесен халĕ пирĕн пĕтĕм тăван çĕршыв фронт пулса тăрать. Яшă-и эсĕ е хĕр-и, пилот-и е тракторист-и, слесарь-и е ткачиха-и, телефонистка-и е шахтер-и, ученăй-и е сухаçă-и, кам мĕнле ĕçре тăнине пăхмасăр, пурне те эпĕ гитлерла бандăна таран меслечĕпе хăюллăн та татăклăн пыра-пыра çапма чĕнетĕп! Европăри тата Америкăри халăхсен çамрăк ăруĕ! Пирĕн пĕрлĕхре—гитлеризма хăвăртрах çĕнтермелли шанчăк. Камăн чура пулас килмест, вăл пирĕнпе пĕрле çапăçăва пырать.

Британи королевствин сывлăшри вăйĕсен паттăр пилочĕсем! Совет летчикĕсенчен боевой салам йышăнăр. Гитлерла Германине çирĕпреххĕн пыра-пыра çапăр!

* * *

Митингра Ленинградăн геройла çамрăкĕсем, Англири, Америкăри, Швецири çамрăксен нумай тĕрлĕ организацийĕсем, политикăпа обществăллă деятельсем янă саламсене вуласа панă. Ирĕклĕхе юратакан аслă халăхсен çамрăкĕсем кĕрешӳре пĕрлĕхлĕ пулса таччăн пĕтĕçсе тăнине кăтартакан çав саламсене митинга пухăннисем шавлăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Митингра пулнисем пысăк хавхаланупа ответлă саламсем янă.

Паллă композитор **Вано Мурадели** мĕнпур тĕнчери çамрăксене чĕнсе каланине вуласа панă. Ăна тăвăллăн алă çупнипе кĕтсе илнĕ. Çав чĕнсе калани мĕнпур этемлĕх тăшманне хирĕç—Германи фашизмне хирĕç хаяр çапăçăва тухма йыхăрса пĕтĕм тĕнчипе хăватлăн янăраса кайĕ. Чĕнсе каланин юлашки строкисем: «Çапăçăва! Гитлеризма хирĕç татăклă та тĕрĕслĕхлĕ таса кĕрешĕве! Фашизма çапса аркататпăр! Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!» тенисем—ирĕклĕхшĕн, чыслăхшăн, çамрăклăхшăн, пурнăçшăн хаяр кĕрешĕве çĕкленекен мĕнпур тĕнчери çамрăксен çапăçури лозунгĕсем пулса тăраççĕ.

Çамрăксен фашизма хирĕçле митинге радио тăрăх панă.

СОВЕТ СОЮЗĔН ГРАЖДАНĔСЕМ!

Фашистла бандитсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем тата кĕпе-йĕмсем парăр!

СОВЕТСКОЕ. Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас ĕç нумай колхозсенче ăнăçлăн пулса пырать. Асламас ялсоветĕнчи колхозсен членĕсем 57 тир, 29 килограмм çăм, Катăшри колхозниксем — 31 тир, 73 килограмм çăм, Мăн Чурашри колхозниксем 96 тир, 66 килограмм çăм тата ытти ăшă япаласене чылай пачĕç. Этменьре хĕрсем колхоз клубне пухăнса çĕрĕ-çĕрĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли алса-чулха çыхаççĕ.

Октябрĕн 1-мĕшне районри склада 933 тир, 663 килограмм çăм тата ытти япаласем пухăннă.

Çав вăхăтрах Александровскри «Красное Сормово» колхозра ăшă тумтирсем пухакан комисси (унăн председателĕ А. Максимов) çителĕксĕр ĕçлет. Кунта çак ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ. Тури Ачакри пуçламĕш парторганизацин секретарĕ И. Потапов юлташ та Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем хатĕрлесе парасси çинчен колхозниксене ăнлантарса парас ĕçе кирлĕ пек организацилеймен. Çавна пула кунта ăшă тумтирсем пухас ĕç çителĕксĕр пулса пырать.

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе колхозниксем хушшинче ăнлантару ĕçне вăйлатмалла, çапла тусан çеç ку ĕçе ăнăçлăн туса пыма пултарăпăр.

П. НИКИТИН.

ВКП(б) Советски райкомĕн
секретарĕ.

* * *

ЕТЕРНЕ. Чурпай ялсоветне кĕрекен «Правда» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенче Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухассипе Г. Захаров, Г. Бажайкин, И. Ермекин, К. Пуяндайкин, А. Сандимиркина тата П. Ефимов комсомолецсем аван ĕçлеççĕ. Вĕсем кĕске вăхăт хушшинчех 47,4 килограмм çăм, 44 тир, 34 метр пир, 10 çĕлĕк, кĕпесем, çăм чулхасем, 1 мăшăр çăмата, сăмса тутрисем пухнă. Çавăнпа пĕрлех вĕсем икĕ пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пухса оборона фондне панă.

Колхозниксем хăйсен япалисене Хĕрлĕ Çар валли ярса пама ăшă тумтир пухакан комисси членĕсем патне килне пырсах параççĕ.

М. ДАНГЕР.

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Турхан ялсоветне кĕрекен «Октябрь» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсем парса пулăшаççĕ. Ялсовет председателĕ А. Осипов, коммунист Н. Шоляков юлташсем икшер тир, колхозник Я. Алексеев юлташ 600 грамм çăм, пĕр алшăлли пачĕç.

Çапла, колхозниксем икĕ кун хушшинче 54 тир, 8 мăшăр портянка, 6 мăшăр алшăлли, 6,5 килограмм çăм пуçтарчĕç.

А. КОСОЙКИН.

* * *

Шупашкарти Главлесосбытра ĕçлекен работниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă тумтирсем парса пулăшаççĕ. Çак кунсенче А. М. Хохлов юлташ пĕр мăшăр çăматă, И. А. Андреев, М. Смирнов, И. Воронцов юлташсем пĕрер çĕлĕк, Фальковский 400 грамм çăм, Гаврилова 400 грамм çăм панă. Пĕтĕмпе коллектив 17 çĕлĕк, пĕр мăшăр çăматă, 800 грамм çăм, пĕр шарф пухса панă.

Вĕсем Хĕрлĕ Çара малалла та ăшă тумтирсем парса пулăшма пулчĕç.

Н. Ю.

Политикăллă агитацин витĕмлĕхĕшĕн

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче политикăллă агитаци питех те çивĕч, витĕмлĕ пулмалла. Агитатор каласа панине ĕççыннисем лайăх тата тĕрĕс ăнлансан çеç агитацилле ĕçĕн усси тулли тата çителĕклĕ пулма пултарать. Çавăнпа та ВКП(б) Первомайски райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ политикăллă агитацие витĕмлĕн туса пырассине организацилесси çине уйрăмах хытă çавăрăнса пăхать.

Райком агитаторсен йышне пăхса туса районри активран çирĕм коммуниста ĕççыннисем хушшинче лекцисем, докладсем туса пама уйăрчĕ, массăллă-ăнлантаруллă ĕçе ялти интеллигентсене, вăтам шкулти аслă классенче вĕренекенсене хутшăнтарчĕ. Аслă Чемень ялĕнче учительница Т. Исмукова юлташ çуллахи каникул вăхăтĕнче колхозниксем хушшинче агитаци ĕçне аван туса пычĕ. Вăл колхозниксемпе пĕрле уйхирте ĕçлесе, кану вăхăтĕнче яланах колхозниксене хаçатсенчи статьясене, Совет Информбюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа паратчĕ, вăрçă вăхăтĕнче кашнинех харпăрхăйĕн вăйне шеллемесĕр ĕçлеме хушни çинчен ăнлантаратчĕ. Çав ялтах учитель И. Макаров тата учительница Макарова юлташсем аван ĕçлерĕç.

Политикăллă агитацине пĕрмаях туса пынине пула, колхозсем тырпул пухса кĕртес, кĕрхи тырра акса хăварас, кĕлтесене капана хывас тата аван çапас ĕçсене вăхăтра туса пычĕç. Колхозсенче политикăллă тата производствăллă çĕкленӳ вăйлансах пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем оборона фондне укçа-тенкĕ тата тырпул параççĕ. Районри вунă колхозра кăна оборона фондне 155,6 центнер тырă, 21.500 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, 1763 тенкĕ укçа панă. «Красноармеец» колхозăн председателĕ Яков Никитин оборона фондне 50 ĕçкунĕ панă. «Правда» колхозри Иустина Соколова оборона фондне 10 ĕçкунĕ панă, унăн виçĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта.

Нăрваш-Шăхальти агитколлективăн руководителĕнче çамрăк коммунистка А. Халдырмина юлташ ĕçлет. Ку коллективра 27 агитатор тата 11 вулавçă. Вĕсем массăсем хушшинче партипе правительство решенийĕсене ăнлантараççĕ, хаçатсенчи хыпарсене каласа кăтартаççĕ. Ку ялсоветне кĕрекен колхозсем тырпулсене йăлтах пуçтарса кĕртнĕ, тырпул парас тĕлĕшпе государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă.

«Восход» колхозăн председателĕнче парти членĕн кандидачĕ Шайманов юлташ ĕçлет. Вăл тăрăшнипе колхоз государство умĕнчи парăмсене йăлтах парса татнă, колхозниксем заем укçине срокчен тӳлесе татнă, сĕт, çăмарта тата аш-какай памалли обязательствăсене тултарнă. Çак колхозра Хĕрлĕ Çар валли 10 мăшăр çăматă, 30 тир, 25 мăшăр алса, 10 мăшăр чулха тата ытти япаласем пухса панă.

Предприятисенчи агитколлективсем те хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса пыраççĕ. Главрыбтарăн Турханти вăрманпромхозĕнче агитколлектив руководителĕ пулса Бельский юлташ ĕçлет. Вăл агитаторсемпе беседчиксене пухса, малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен каласа парать, вĕсене практикăллă ĕçре пулăшать. Кунти агитаторсемпе вулавçăсем яланах рабочисем хушшинче политикăллă калаçусем ирттереççĕ, Совет Информбюровĕн пĕлтерĕвĕсене каласа кăтартаççĕ. Çавна пула, рабочисен производствăри активлăхĕ ӳссе пырать. Шофер Пичугин юлташ кашни кунах икĕ смена хушши ĕçлет. Механик Воробьев юлташ хăйĕн сменинче ĕçленисĕр пуçне тата иккĕмĕш сменăра шофер пулса ĕçлет. Рабочи Е. Кирьянов юлташ ĕç нормине 300 процент таран тултарса пырать. Вăл август уйăхĕнче 2500 тенкĕлĕх ĕçленĕ. Вăрманпромхоз коллективĕ августăн 17-мĕшĕнче воскресник туса ирттерчĕ, çав кун ĕçлесе илнĕ 1612 тенкĕ укçана çĕршыв оборонин фондне пачĕ.

Агитколлектив руководителĕсене, агитаторсемпе вулавçăсене кулленхи ĕçре районри парткабинет чылай пулăшу парать. Унта консультацисем, докладсем тата лекцисем пулаççĕ. Парткабинет работникĕсем агитаторсене кирлĕ кĕнекесене, плакатсене тата ытти литературăна тупса хатĕрлеççĕ.

Агитаторсем массăллă-ăнлантарулла ĕçе граждăнсене çар ĕçне, ПВХО ĕçне вĕрентессипе çыхăнтарса туса пыраççĕ, хăйсем те çар ĕçне вĕренеççĕ.

Çапла вара, агитацилле ĕçе парторганизацисен хальхи вăхăтри задачисене пурнăçа кĕртессипе тачăн çыхăнтарса туса пыни ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхне ӳстерет.

И. МАКАРОВ.

ВКП(б) Первомайски райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Рационализаторла хаклă сĕнӳ

КАНАШ. (**Хамăр корр.**). Германи фашизмне хирĕç пыракан вăрçă пирĕн ăс-тăн работникĕсене никăçанхинчен те хăюллăрах, пултаруллăрах тата уçăмлăрах ĕçлеме хушать. Кашни инженер, кашни техник, кашни рабочи халĕ çине тăрсах ĕç тухăçлăхне ӳстермелли, продукцин пахалăхне лайăхлатмалли, ĕç вăхăчĕпе туллин усă курмалли, халăх пурлăхне, укçи-тенкине перекетлемелли çĕнĕрен-çĕнĕ майсем шырать. Вĕсем кирек мĕнле техникăллă ӳсĕм те, унпа производствăра усă курсан, тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме, гитлерла вăрă-хурахсене çĕнтерме пулăшнине лайăх пĕлеççĕ.

Юлашки вăхăтра Канашри вагонсем юсакан заводра рационализаторла сĕнӳсем парасси палăрмаллах ӳсрĕ. Инженерсемпе техниксем, рабочисемпе служащисем продукци нумайрах кăлармалли, ĕç хатĕрĕсене улăштармалли, материалсене, укçа-тенкĕне, вăхăта перекетлемелли вуншар сĕнӳсем параççĕ. Завод администрацийĕ вĕсене тĕплĕн пăхса тухса çийĕнчех усă курма тăрăшать.

Ку таринччен пулнă сĕнӳсенчен чи пысăкки вăл—главнăй энергетик Г. П Петухов тата партбюро секретарĕ Г. Н. Сорокин юлташсем заводăн энерги хуçалăхне рационализацилесси пирки панă сĕнӳ. Петуховпа Сорокин сĕнĕвĕ тăрăх ку таринччен сахал ăшă парса тăнă хурансемпе усă курма пăрахмалла. Вĕсен вырăнне бойлер установкине лартмалла. Вара завода кирлĕ ăшăна пĕтĕмпех ТЭЦ-ран парса тăмалла пулать. Çавна май 20 çын ĕç вăйĕ тата хурансем лартнă пӳлĕм пушанать. Пушаннă пӳлĕмрен тимĕрç цехĕн металĕсене тытмалли склад тăваççĕ. Унсăр пуçне, ку сĕнӳ тăрăх пăспа ĕçлекен мăлатуксене пăчăртнă (сжатый) сывлăшпа ĕçлеттермелле тума шутлаççĕ.

Петуховпа Сорокин юлташсен сĕнĕвĕ çумне Григорьев, Лепихов, Свешников, Баймуратов энергетиксем татах çĕнĕ сĕнӳ парса хушнă. Вĕсем ăшă хуранĕсем лартмалли уйрăм пӳлĕм тăвас вырăнне «Щ» сериллĕ паровоз хуранне лартма шутлаççĕ.

Çак сĕнӳсене завод управленийĕ сӳтсе-явса çирĕплетнĕ. Халĕ вĕсене пурнăçа кĕртмелли ĕç графикне тунă. График тăрăх пĕтĕм ĕçсене çак çул вĕçне туса çитерме палăртнă.

Т. ИВАНОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Кĕçĕн лейтенант Д. С. Пташко командир пулса ертсе пыракан батарея икĕ кун хушшинче кăна фашистсен пуçĕсем çине 30 тонна ытла металл кăларса ярса, противникăн укрепленилле пункчĕсене калама çук вăйлăн аркатнă. Снарядсемпе осколоксем пырса тивнипе нимĕçсем çапăçу хирне пиншерĕн вилсе юлнă. **Ӳкерчĕк çинче** (сулахайра)—Д. С. Пташко хăйĕн батарейин наблюдательнăй пунктĕнче; сылтăмра — унăн батарейинчи йывăр оруди огневой позицире. С. Фридлянд фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Тăван çĕршыв оборонин фондне

ЕТĔРНЕ. Балдай зооветучастокне кĕрекен колхозсенчи ветработниксем çĕршыв оборонин фондне 800 тенкĕлĕх заем облигацийĕ тата кашни уйăхрах пĕрер кунхи ĕç укçине пама пулчĕç. Зоотехник М. Клинов юлташ 250 тенкĕлĕх заем облигацийĕ, ветфельдшер П. Соловьев 100 т. облигаци пачĕ.

Балдайри вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем Буденный ячĕпе тăракан колхозра ĕçлесе тунă 236 ĕçкунне çĕршыв оборонин фондне пачĕç. Çавнашкалах учительсем пĕр кунхи ĕç укçине параççĕ.

Чубайри Киров ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ Бархаткин 100 тенкĕлĕх облигаци, колхозница В. Никитина 100 тенкĕлĕх облигаци пачĕç. Паянхи куна колхозĕпе пĕр пине яхăн заем облигацийĕ пухăнчĕ.

Кунпа пĕрлех ĕççыннисем государство умĕнчи заданисене срокчен пурнăçласа пыраççĕ. Колхозник И. Еремкин юлташ страховка укçипе ялхуçалăх налогĕн укçине тӳлерĕ. Вăл аш-какай, сĕт-çу парас заданине те тултарнă.

И. ТИМОНИН.

ИШЛЕЙ. Çыхăну уйрăмĕнче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 2 мулаххай, 20 алшăлли, 2 простынь, 430 грамм çăм, пĕр мăшăр перчатка, 4 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм панă.

Кунсăр пуçне вĕсем тăван çĕршыв оборонине çирĕплетме 665 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă.

Г. КВАСОВ.

• • •

ЛЕНИНГРАД, сентябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Пĕтĕм халăхăн оборона фондне ленинградецсем хывнă вклад кунран-кунах ӳссе пырать. Вĕсем сентябрĕн 25-мĕш тĕлне укçан тата ĕç укçинчен уйăрса 24.555 пин тенкĕ, 145 грамм платина, 10.380 грамм ылттăн, 503 килограмм кĕмĕл тата хаклă чулсем, ютçĕршыв валютисем тата тĕрлĕрен хаклă япаласем вуншар пин тенкĕлĕх панă. (ТАСС).

Укçа-тенкĕне перекет кассинче усрăр

СССР Финанс Халăх Комиссариачĕн распоряженийĕ тăрăх, 1941 çулти июнĕн 23-мĕш иртсен перекет кассисене хывнă укçа-тенкĕне вкладчиксене кирек хăш вăхăтра та тата кирек мĕн чухлĕ те параççĕ.

Совет халăхĕ Германи фашизмне хирĕç отечественнăй вăрçă туса пынă кунсенче перекет кассисене укçа-тенкĕ нумай хывни—совет çыннисен патриотизмĕ калама çук ӳснине яр-уççăн кăтартса парать.

Халăхсем перекет кассисене укçа-тенкĕ хывасси кашни кунах ӳссе пырать. Перекет кассинче усранакан кашни пĕр тенкĕ Совет Союзĕн оборонăллă вăй-хăватне ӳстернине, фашистла варварсене хăвăртрах çапса аркатса пĕтерсе тăкма пулăшнине рабочисем, хресченсем, интеллигенци лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Шупашкар хулинчи перекет кассине хула çыннисем—Ш. юлташ 2.000 тенкĕ, З. юлташ 2.000 тенкĕ, К. юлташ 1.500 тенкĕ тата Ч. юлташ 1.400 тенкĕ хыврĕç. Вĕсем перекет кассине укçа хывса, çапла каларĕç: «Пирĕн укçа-тенкĕпе государство тăшмана çĕнтерес ĕçре усă куртăр», терĕç.

Горький облаçĕнчи Богородск хулинче пурăнакан гражданин Х. районри перекет кассине пынă та, çапла каланă: «Халĕ государствăна укçа-тенкĕ никăçанхинчен те ытларах кирлĕ. Кашни патриотăн тивĕçĕ—государствăна мĕнпе май пур, çавăнпа пулăшасси. Правительство эпĕ перекетленĕ пĕчĕк сумăпа—1.100 тенкĕпе паттăр Хĕрлĕ Çара татах та вăйлăрах хĕçпăшаллантарас ĕçре усă куртăр».

Куйбышев облаçĕнчи Кузоватово ялĕнче пурăнакан Якимова юлташ перекет кассине 1.900 тенкĕ укçа хывнă чухне çапла каланă: «Эпĕ ĕçлетĕп, мана укçа-тенкĕ питех кирлĕ мар. Тăшмана çапса аркатас çĕрте тăван çĕршыва усă патăр».

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем хăйсен перекетленĕ укçи-тенкине перекет кассисене хывасси анлăн сарăлса пырать. Çапла, Сталинград облаçĕнчи Ермански районри перекет кассине юлашки вăхăтра кăна 1.708.000 тенкĕ укçа хывнă.

Совет Союзĕнче перекет кассисене ĕççыннисем юратаççĕ, ĕççыннисен пурнăçĕпе йăлинче перекет кассисем пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсем укçа-тенкĕне пухса пама май параççĕ.

Укçа-тенкĕне перекет кассинче тытни—вĕсене сыхласа усрама чи лайăх, шанчăклă тата усăллă май. Перекет кассинчи вкладчиксене уйрăм правăсем, çăмăллăхсем панă.

Совет Союзĕн халăх хуçалăхĕнче перекет кассисем калама çук пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем миллионшар ĕççыннисене харпăрхăй бюджетне тĕрĕс тытса пыма, хăйсен укçа-тенкĕ средствисене шанчăклăн тата усăллă тытса усрама пулăшаççĕ. Перекет кассисене укçа-тенкĕ мĕн чухлĕ ытларах хываççĕ, вкладчиксен йышĕ мĕн чухлĕ нумайрах пулать, хăйĕн оборонăллă вăй-хăватне малалла та çирĕплетсе пыма тата фашистла вăрă-хурахсене хăвăртрах çапса аркатса пĕтерсе тăкма Совет государстви укçа-тенкĕ çавăн чухлĕ нумайрах илет.

Хăвăрăн укçа-тенкĕ средствисене перекет кассисенче усрăр. Перекет кассинче сыхланса усранакан кашни пĕр тенкĕ укçа Совет Союзĕн оборонăллă вăй-хăватне çирĕплетет.

Ф. МИРОНОВ.

Çăмарта параççĕ

СОВЕТСКОЕ. Колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа пыраççĕ. Иртнĕ кунсенче Лешкас-Асламасри «Коминтерн», Анат-Ачакри «Новый путь», Исмендерти «Радио», Александровскинчи. «Красное Сормово» колхозсем 1941 çулшăн государствăна çăмарта парса татрĕç.

ЯК. СИГАЙ.

ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ

Двухсотниксен движенийĕ

Хальхи вăхăтра пирĕн фабрик-заводсенче, колхозсенче стахановла çĕнĕ движени — двухсотниксен движенийĕ вăйлăн сарăлса пырать. Çамрăксен çак движенийĕ ваттисене те çавăрса илчĕ. Двухсотниксем—вĕсем хăйсен ĕç нормине кулленех 200 процентран кая мар тултарса ĕçлекенсем.

Двухсотниксем вăхăтăн кашни минучĕпе тата оборудованин пĕтĕм вăйĕпе тĕплĕн усă курса, предприятисемпе колхозсенче пысăк ĕçсем туса пыраççĕ. «Вагонник» хаçат Канашри вагонсем юсакан заводра двухсотниксен движенийĕ мĕнле сарăлса кайни çинчен çапла çырать:

«Пирĕн заводра двухсотниксем кашни кунах йышлăн ӳссе пыраççĕ. Çак çĕнĕ движенин организаторĕсем—коммунистсемпе комсомолецсем. Тимĕрçсен цехĕн мастерĕ орденоносец коммунист И. Кукляев цехри ĕçе тĕплĕн пĕлсе йĕркелени ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшнă. Тимĕрçĕ Федин тата прессовщик Козлов коммунистсем ĕç нормине кулленех 200 процент тултарса пыраççĕ.

Ремонтно-механически цехра ĕçлекенсенчен 92 проценчĕ двухсотниксем. Çав цехра ĕçлекен коммунист Григорьев нормăна 200—250 процент тултарса ĕçлет. Çавăн пекех, çамрăк коммунистсем орденоносец М. Цапин тата Алексеев юлташсем те икшер норма тата ытларах тултарса пыраççĕ.

Уйрăм çынсем çеç мар, пĕтĕм бригада икшер норма тултарса ĕçлекенни те пур. Сăмахран, слесарьсен Б. Голубев коммунист ертсе пыракан бригадинче 9 çын, вĕсем пурте — двухсотниксем».

«Вагонник» хаçат двухсотниксен мухтавлă ĕçĕсем çинчен производствăра хăйсен вăйне, сывлăхне шеллемесĕр паттăррăн ĕçлекен çынсем çинчен тăтăшах тата тĕплĕн çырса тăрать.

— Комбинатри стахановецсем Астрохов тата Большаков кашни кунах икшер-виçшер норма тултараççĕ. Шиерский юлташ хăшпĕр кунсенче 400—500 процент тултарать. Сентябрь уйăхĕнче вăл нормăна 200 процентран кая пĕрре те тултарман тесе çырать Çĕмĕрле районĕнчи **«Социализмлă ĕç»** хаçат. Паллах, двухсотниксем Çĕмĕрлери предприятисенче те кулленех йышланса пыраççĕ, вĕсем ку ĕçре паха примерсем кăтартаççĕ. Анчах, калас пулать, «Социализмлă ĕç» хаçат çаксем çинчен сахалтарах çырать-ха. Двухсотниксем тăвакан паха ĕçсем, вĕсен геройла ĕçĕсем çинчен çырнă материалсем хаçат страницийĕсенче сахалтарах-ха.

Çавăн пекех, Куславкка районĕнчи «Ленин ялавĕпе» хаçатра та сентябрь уйăхĕнче тухнă номерсенче двухсотниксем çинчен çырнă материалсем сукпа пĕрех. Куславкка райхаçачĕн, колхоз ĕçĕнчи двухсотниксем çинчен çырнипе пĕрлех, промышленность предприятийĕсенче çак движени мĕнле сарăлса пыни çинчен тĕплĕнрех çырмалла.

Кунта эпир предприятисенчи двухсотниксем çинчен çыртăмăр. Икшер норма тата ытларах тултарса ĕçлекенсен йышĕ пирĕн колхоз производствинче те ӳссех пырать. Çавăнпа та ĕнтĕ двухсотниксем çинчен çырасси районри хаçатсене пурне те тивекен ыйту пулса тăрать. Кашни хаçат çак пысăк та мухтавлă ĕç районра, предприятисенче, колхозсенче мĕнле сарăлса пыни çинчен тĕплĕн тата тăтăшах çутатма тивĕç. Çавăнпа пĕрлех, двухсотниксен движенине пуçарса пырас çĕрте коммунистсемпе комсомолецсем мĕнле ĕçленине уççăн кăтартса памалла.

Двухсотниксен движенине сарса пырас çĕрте инженерсемпе техниксем тата мастерсем пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсем ку ĕçре тивĕçлĕ пулăшу парса пымалла. Çамрăксене, производствăна çĕнĕрен пынă хĕрарăмсене тата пĕр вăхăтрах темиçе профессипе ĕçлес текенсене кулленех пулăшса, вĕрентсе пырас пулать. Хаçатсен çак ыйтусем çинчен те çырмалла.

Октябрьти революци XXIV çул тултарни çывхарса килет. Аслă Октябрьте çĕнсе илнисене тискер тăшманран хӳтĕлесе хăварма пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленсе тухрĕ. Ĕççыннисем ĕç фронтĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсем туса, Германи фашизмне çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

Фабрик-заводсенче тата колхозсенче ик-виçшер норма тултарса ĕçлес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва татах та анлăн сарса пымалла. Çав ăмăртăва пуçарса пыракансем—хаçатсем пулса тăмалла.

Ĕç нормине икĕ хут ирттерсе тултараççĕ

ÇĔРПУ. Турханти «Красный самолет» колхоз уйхир ĕçĕсене хăвăрт вĕçлесе пырать. Колхозра халь авăн çапас тата çĕрулми кăларас ĕçсем пыраççĕ. Паянхи куна молотилкăпа авăн çапнă çĕрте 15 çын, тăпачăпа çапнă çĕрте 30 çын, çĕрулми кăларнă çĕрте 25 çын ĕçлет. Колхозниксем пурте ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ. Машиновед Иван Титов сменăра 400 пăт ытла авăн çапать. Чылай колхозниксем ĕç нормине икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. «Красный самолет» колхоз октябрь уйăхĕ пуçланнă тĕлелле уйхир ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлет.

Г. ПЕТРОВ.

ХАЛĂХА ПĔЛСЕ ТĂМА

„Химиллĕ тревога“ сигналĕ пулнă хыççăн мĕн тумалла

Фашистла бандитсем нимĕнле ирсĕрлĕх умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Совет Союзне хирĕç вăрă-хурахла пуçласа янă вăрçăра вĕсем сисмен хутран отравляющи веществосемпе усă курма хатĕрленеççĕ.

Тăшман пире вăрттăн, сисмен хутран килсе ан тапăнтăр тесен, пирĕн химиллĕ тапăнуран сыхланма яланах хатĕр пулмалла. Индивидуальнăй майпа сыхланмалли средствăсемпе усă курма пĕлекен, ПВО сигналĕсене уйăрса илме пĕлекен çынсемшĕн, сывлăшран химипе тапăннă чухне йĕркелĕхе пăхăнакан, йĕркене пăсман çынсемшĕн отравляющи веществосем (ОВ-сем) хăрушă мар.

Химиллĕ бомба çурăлнă чухне взрыв сасси ытла вăйлах пулмасть тата бомба çурăлса кайсан шурă тĕтĕм тухать, çак тĕтĕм вара çиле май вĕçсе кайнăçемĕн хăйĕн калăпĕшне пысăклатса пырать. Химиллĕ бомбăна фугаснăй бомбăран çакăнпа уйăрса илме пулать ĕнтĕ.

Тăшман самолечĕ отравляющи веществона ăрасна **прибортан тăкса хăварать** пулсан, вара самолет хыççăн хура тĕтĕм пулса юлать. Тăшманăн самолечĕ тата отравляющи вещество тултарнă ампулăсем -- металран е катăкран тунă ытлашши пысăках мар савăтсем — пăрахса хăварма пултарать, çак савăтсем вара çĕр çумне пырса çапăнса çĕмĕрĕлсе каяççĕ те ОВ-сене сирпĕтсе салатаççĕ.

Тăшман отравляющи веществосемпе усă курни çинчен халăха «Химиллĕ тревогăн» сигналĕпе пĕлтереççĕ.

«Химиллĕ тревогăн» сигналне наблюдательнăй постсенчен химиллĕ авиабомбăсем çурăлнине е ОВ тумламĕсем ӳкнине сиссен параççĕ. Кӳршĕри постсем химиллĕ тревогăн сигналне, ОВ-сем çав постсем асăрхаса тăракан районсем еннелле те сарăлма пуçласан çеç йышăнса халăха пĕлтереççĕ. Çак постсем яланах сиенленнĕ участокăн çиле хирĕçле енче пулмалла.

Çапла ĕнтĕ, «химиллĕ тревогăн» сигналĕ, «сывлăш тревогин» сигналĕнчен уйрăм тăрать, вăл вырăнти тревога пулать, урăхла каласан, вăл пĕтĕм хула е район халăхĕшĕн мар, **химиллĕ хăрушлăх чăннипех пуçланнă участокшăн çеç обязательно пулса тăрать.**

«Химиллĕ тревогăн» сигналĕсене тимĕр хăмасене е рельса татăкĕсене т. ыт. те час-час çапнипе параççĕ.

Газоубежищĕсенче «химиллĕ тревогăн» сигналĕсене панă хыççăн йĕркелĕхе çирĕп пăхăнмалла. Убежищĕн алăкĕсене сывлăш кĕмелле мар хупса лартаççĕ те фильтровентиляци установкисене ĕçе яраççĕ. Газоубежище тулашĕнчи çынсен (самозащита группинчи дежурнăйсен, МПВО командисенчи боецсен), çавăн пекех тата газоубежище валли ятарласа хатĕрлемен хӳтлĕхсенчи çынсен, «химиллĕ тревогăн» сигналĕ хыççăн çийĕнчех противогаз тăхăнмалла.

Сывлăшра ОВ е шăрши тĕлĕшĕнчен кăмăла пăтрантаракан мĕнле те пулин урăхла вещество пуррине сиссен кашни çыннăнах, химиллĕ тревогăн сигналне панипе паманнине пăхмасăрах, химиллĕ тапăнуран сыхланмалли индивидуальнăй средствăсемпе усă курмалла. Çакăнпа пĕр вăхăтрах унăн хăрушлăхĕ çинчен самозащита группин е ПВО командин çывăхри постне пĕлтермелле.

Газоубежище валли ятарласа туман хӳтлĕхсенчен халăха ертсе тухма сиенленнĕ вырăнсенче ăрасна майпа каçăсем (çулсем) тăваççĕ. Халăхăн самозащита группинчи боецсен пур кăтартăвĕсене те тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымалла: каçă (юри тунă çул) çинчен аяккалла тухмалла мар, сиенленнĕ япаласем çумне сĕртĕнмелле мар т. ыт. те. Кунсăр пуçне, ӳт-тире сыхлама пултаракан алă айĕнчи ытти япаласемпе те усă курмалла: резина галош тăхăнмалла, урана çĕтĕк-çурăкпа чĕркемелле, ура тĕпне хăма татăкĕсем çыхса хумалла, алăсене перчатка тăхăнмалла, мăя шарфпа чĕркесе хуплаламалла.

Час сӳрĕлмен шĕвĕ отравляющи вещество (СОВ) тумламĕ тумтир çине е тӳрех ӳт-тир çине лексен, индивидуальнăй противохимически пакетпа усă курса, ОВ тумламне çийĕнчех типĕтсе илмелле те, ӳт-тирĕн сиенленнĕ участокне дегазаци тумалла. Çавăн пекех тата бензинпа, краççинпа е денатуратпа йĕпетнĕ ваткăпа е тутăр татăкĕпе усă курма пулать. ОВ тумламне çакăн пек типĕтсе илмелле: типĕ ваткă е тутăр татăкне ОВ тумламĕ çине хăвăрт хумалла та, ăна сăхтарса илмелле, анчах та çак тутăр татăкĕпе ОВ тумламне никăçан та сăтăрса саркаласа яма юрамасть. Çакăн хыççăн вара çак участока ирĕлтерекеннипе е дегазаторпа çуса тасатмалла.

Противохимически пакетăн çĕнĕ образецĕнче ӳт-тирĕн час сӳрĕлмен ОВ-па сиенленнĕ участокне дегазацилемелли ăрасна порошок тата марлĕрен тунă виçĕ салфетка пур. Порошока пакета нӳрĕ кĕртмен хутпа чĕркесе хунă.

Дегазаци тăвас тесен, ӳт-тир çинчен малтан ОВ-сен куçа курăнакан йĕрĕсене тампонпа типĕтсе илмелле. Унтан сиенленнĕ участок çине порошок сапмалла та, ăна марлĕпе е çемçе хутпа сăтăрса ӳт ăшне кĕртмелле. Çакăн хыççăн сиенленнĕ участока шывпа йĕпетмелле, çĕнĕрен хулăм сийĕ порошок сапмалла та, вара ăна пăтă пек пуличченех сăтăрмалла. Ăна ӳт çинче 10—15 минута хушши тытса тăмалла, унтан шывпа çуса ямалла. Шыв çывăхра çук пулсан, ӳт-тирĕн сиенленнĕ пайне икĕ хутчен порошокпа сапмалла.

Час сӳрĕлмен отравляющи вещество (СОВ) кĕпе-тумтир çине лексен, кĕпе-тумтире хывса илмелле те, СОВ лекнĕ кĕпе-тумтир айĕнчи ӳт-тире ирĕлтерекеннипе (бензинпа, краççинпа, денатуратпа, одеколонпа) е ăшă шывпа супăньпе çуса тасатмалла.

Час сӳрĕлекен ОВ лексен чи малтанах çынна отравляющи вещество сарăлнă атмосферăран уйăрмалла — ăна противогаз тăхăнтармалла та сиенленнĕ вырăнтан аяккарах илсе каймалла.

Тăшман сывлăша питĕрекен ОВ-семпе усă курнă пулсан, аманнă çынна, аманнин паллăлăхĕсем лайăххăн палăрма пуçличченех, ăшă çĕрте лăпкă выртма ирĕк парас пулать, вăл хăйне-хăй сывă çын пекех тыткалать пулсан та, ăна вырăнтан-вырăна куçса çӳреме е ĕçлеме ирĕк памалла мар. Пĕтĕмĕшле ядлă ОВ-семпе сиенленнĕ çын начар сывлама пуçласан, ăна искусственнăй майпа сывлаттармалла.

Вĕçĕлтеттерекен ОВ-сене пула сунаслама тытăнсан е куççуль юхма пуçласан, противогаза хывма юрамасть. Кун пек чухне сиенленнĕ участокран васкасах тухмалла та, унтан вара куçсене содăн икĕ процентлă ирĕлчĕкĕпе (пĕр стакан шывра пĕр чей кашăкĕ сода ирĕлтернĕ ирĕлчĕкпе) çуса тасатмалла, сăмса-карланкă таврашне те çак ирĕлчĕкпех чӳхемелле.

Кашни çын хăйне-хăй сыхлама тĕплĕн хатĕрленсен тăшман химипе тапăнни те пит хăрушах мар. Индивидуальнăй майпа тата коллективпа сыхланмалли средствăсем пире ку таринччен паллă пур ОВ-сенчен те шанчăклăн сыхлаççĕ. Пирĕн алăра çак средствăсем пурте пур. Ирсĕр фашистла бандитсем темĕн пекех чеелленсен те, пире пурпĕрех сисмен хутран килсе тапăнаймĕç.

А. ДАНИЛОВ.

2-мĕш рангри военинженер.

Совет Информаци Бюровӗнчен

(Сентябрӗн 30-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӗвӗн вӗҫӗ)

текомбинатсем тӑхӑр уйӑхри программӑна срокчен тултарнӑ. Нефтепромыслӑсен стахановецӗсем унччен ӗҫлемен чылай скважинӑсене вӑрҫӑ кулӗсенче ҫӗнӗрен ӗҫе кӗртнӗ. «Сталиннефть» трестӑн 6-мӗш промыслин стахановецӗсем Музафаров, Алибеков, Мехрабов тата ытти юлташсем нумай ҫул каярах ӗҫлеме чарӑннӑ икӗ скважинӑна строя кӗртнӗ. «Лениннефть» трестӑн иккӗмӗш промыслинче Аскеров, Рагимов тата ытти юлташсем пӗр скважинӑн дебитне вунӑ хут, тепринне 24 хут ӳстернӗ. Бурангулов юлташ ертсе пыракан ҫамрӑксен бригади Ишимбай промыслисенче планран ирттерсе ҫӗршыва ҫӗршер тонна нефть панӑ. «Актюбнефть» трестӑн «Джаксымай» промыслинче Лайкин юлташӑн бригадинчи бурильщиксем проходка нормисене пӗрмаях ирттерсе тултарса пыраҫҫӗ. Нумай пулмасть, вӗсем пӗр скважинӑна шӑтарас ӗҫе срокчен 7 кун маларах туса пӗтернӗ. «Калининнефть» трестӑн нефтяникӗсем вӑрҫӑри пек ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем пӗр ҫулхи плана сентябрьте пурнӑҫа кӗртнӗ, нефть кӑларассин хӑйне ларакан хакне 9,9 процент, шӑтарас ӗҫӗн хӑйне ларакан хакне 13 процент чакарнӑ.

Октябрӗн 1-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Октябрӗн 1-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем пӗтӗм фронтра противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

* * *

Дельнов майорӑн чаҫӗнчи штурмовой авиаци, фронтӑн Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ енчи участокӗсенчен пӗринче ҫапӑҫакан-скер, пӗр кун хушшинче нимӗҫсенне 80 автомашина, 20 ытла броневик, 4 танк, 20 зенитнӑй оруди пӗтерсе тӑкнӑ тата горючипе боеприпассем усракан 2 пысӑк склада вут тӗртсе ҫунтарса янӑ.

* * *

Фронтӑн Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ енче ҫапӑҫакан Комаров майорӑн авиачаҫӗ юлашки вунӑ кун хушшинче нимӗҫсенне 60 танк, 20 зенитнӑй оруди, 420 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ, пехотӑн 3 полкне пысӑк ҫухатусем кӳнӗ тата кавалери эскадронне пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн аэродромӗсем ҫинче нимӗҫсенне 20 самолет пӗтерсе тӑкнӑ.

Фронтӑн Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ енчи тепӗр участокӗнче Алексеев юлташ военком пулса тӑракан авиачаҫӑн летчикӗсем сентябрӗн 28-мӗшӗнче противникӑнне пехота ларса пыракан 70 автомашина, 14 танк тата 10 бронемашина пӗтерсе тӑкнӑ. Шишкин майорӑн подразделенинчи самолетсем нимӗҫсен мотоколоннине аялтан вӗҫсе пырса атакӑланӑ. Нимӗҫсен пехоти ларса пыракан 20 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Фронтӑн Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ енчи участокӗсенчен пӗринче пирӗн чаҫсем нимӗҫсен боеприпассем тиесе пыракан автоколоннине тытса илнӗ. Тыткӑна илнӗ автомашинӑсен водителӗсем нимӗҫ войскисен тылӗнче партизансен отрячӗсем ҫапӑҫнӑ пирки фашистсен войскисем пысӑк йывӑрлӑхсем тӳсни ҫинчен кӑтартса параҫҫӗ.

Гейнц Апфель шофер ҫапла кӑтартса панӑ: «Сентябрӗн 8-мӗшӗнче манӑн ултӑ юлташа вӗсем Луга хулинчен фронт линийӗ патне боеприпассем вӑхӑтра илсе ҫитерменшӗн арестленӗ пулнӑ. Ҫав колоннӑн составне эпӗ те кӗнӗччӗ. Ҫул хӑрушла пулчӗ. Партизансем пирӗн хыҫран пӗр утӑм юлмасӑр йӗрлесе пычӗҫ, пире хыҫран та, малтан та пыра-пыра ҫапрӗҫ. Партизансем пирӗн ҫине 8 хутчен пыра-пыра тапӑнчӗҫ. Пирӗн груз тиенӗ темиҫе автомашинӑна ҫул ҫинех пӑрахса хӑварма лекрӗ. Икӗ машина темӗнле пысӑк мар шыв урлӑ каҫакан, партизансем арккатса хӑварнӑ кӗпер ҫине пырса кӗрсе шывалла вӑркӑнчӗҫ. Лутаран хамӑр ҫитмелли вырӑна эпир пиллӗк кун хушши кайрӑмӑр. Колоннӑри 14 машинӑран 7 кӑна тӑрса юлчӗ».

Тепӗр водитель Пауль Альтдорф ҫапла пӗлтернӗ: «Пире кашни минутӑра ҫапӑҫусене хутшӑнакан салтаксенчен кая мар хӑрушлӑх кӗтсе тӑрать. Эпӗ тӗрлӗ вӑхӑтра пӗрле ҫӳренӗ пиллӗк водителе партизансем малти позицисенчен ҫӗр километр аякра тӑракан вырӑнта вӗлернӗ. Кашни рейс пурнӑҫшӑн пысӑк хӑрушлӑхпа тата пысӑк йывӑрлӑхсемпе ҫыхӑнса тӑрать. Вырӑс войскисем хӑйсем чакнӑ чухне пӑсса хӑварнӑ ҫулсем халӗ, ҫумӑрлӑ ҫанталӑк пуҫлансан, пачах та юрӑхсӑра тухрӗҫ. Ҫӳреме кунран-кун йывӑрланса пырать. Машинӑсем пылчӑка, лакӑмсене кӗре-кӗре лараҫҫӗ. Туртса кӑлармa пулӑшакан тягачсӑр вунӑ километр та кайма ҫук. Аварисӗр пӗр рейс та иртмест. Ҫакӑнпа партизансем усӑ кураҫҫӗ. Пирӗн автоколонна груза тивӗҫлӗ вырӑна нихӑҫан та вӑхӑтра ҫитерсе курман».

* * *

Нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсем хӑйсем тытса илнӗ районсенче урса иртӗхме халӗ те чарӑнмаҫҫӗ. Ленинград облаҫӗнчи Волосовски районри Верест ялӗнче ҫакӑнтан иртсе пыракан нимӗҫсен чаҫӗсем колхозниксенне мӗнпур продовольствине туртса илнӗ. Нумай мар вӑхӑт иртсен яла нимӗҫсен карательнӑй отрячӗ пырса кӗнӗ. Фашистсем хресченсене пӗр площаде хӑваласа пухнӑ та вӗсене халех ҫӑкӑрпа аш-какай илсе килме приказ панӑ. Колхозниксем хӑйсен нимӗн те ҫук тесе ответленӗ, мӗншӗн тесен, ял витӗр тухса кайнӑ нимӗҫсем мӗнпур продовольствине илсе тухса кайрӗҫ, тенӗ. Вара фашистсем халӑх хушшинчен В. Егоров, М. Таврид тата Р. Озолин колхозниксене сӗтӗрсе тухнӑ та, тӑнран ярицченех хӗненӗ, унтан вара ҫавӑнтах мӗнпур ҫынсен куҫӗ умӗнчех персе пӑрахнӑ. Новосельск районӗнчи Бородкино ялӗнче нимӗҫсем час-часах ялӗпех ухтарусем туса тухаҫҫӗ, ҫаратаҫҫӗ, ирӗксӗрлесе пусмӑрлаҫҫӗ. Пӗр ҫуртра фашистсем 12 ҫулхи ачара тутӑхса кайнӑ кивӗ штык тупнӑ. Ҫав кунах ирсӗрсем ачана тата унӑн тӑванӗсене тискеррӗн асаплантарса пӗтернӗ.

* * *

Польшӑна оккупациленӗ гитлерла войскӑсем Польша патриочӗсен партизанла отрячӗсем ӗҫленине пула чылай ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Нумаях пулмасть Польша ҫарӗн офицерӗ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячӗ Седлец хули патӗнче нимӗҫ салтакӗсен отрячӗ ҫине пырса тапӑннӑ. Фашистсем ҫакна кӗтмен пулнӑ. Пӗр-пӗрин ҫине хире-хирӗҫ пенӗ чухне нимӗҫсен 15 салтакне тата пӗр унтер-офицерне вӗлернӗ. Партизансен отрячӗ Остроленко хули патӗнчи ҫул ҫинче нимӗҫсен продовольстви тиенӗ обозне тытса илнӗ. Нимӗҫсен хуралне тата 9 грузовой автомашинине пӗтерсе тӑкса, партизансем хӑйсемпе пӗрле продуктсем илсе тарса пытаннӑ. Люблин ҫывӑхӗнче партизансем нимӗҫсен кавалери взводӗ ҫине пырса тапӑннӑ. Нимӗҫсем партизансене хирӗҫ атакӑна ывтӑннӑ, анчах та пулеметсен вӑйлӑ вут-ҫулӑмӗ айне лекнӗ те вилнисемпе аманнисене 14 ҫын ҫухатса каялла чакнӑ. Партизансем татти-сыпписӗр пыра-пыра тапӑннипе шикленсе ӳкнӗ оккупациллӗ влаҫсем Польша хулисенче сывалса пыракан аманнӑ салтаксенчен тунӑ гарнизонсене вӑйлатса пыраҫҫӗ.

* * *

Ремесленнӑй училищӗсенче тата ФЗО шкулӗсенче вӗренекен ҫӗршер пин ҫамрӑксем пирӗн промышленноҫа фронт заказӗсене хӑвӑртрах пурнӑҫа кӗртме хастарлӑн пулӑшса пыраҫҫӗ. 1-мӗш номерлӗ ремесленнӑй училищӗре вӗренекенсем Сталинградри трактор заводӗнче кӑтартуллӑн ӗҫлеҫҫӗ. Вӗренӳри отличниксем Бородин, Емельянов тата ыттисем те заводри малта пыракан стахановецсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫамрӑк фрезеровщик Иван Правов сменӑра икшер норма тултарать. Иванов, Щербаков, Подобед, Шур, Юшков тата ытти учениксем кунне нормӑна 150—200-шер процент тултарса пыраҫҫӗ.

Тулари заводсенчен пӗрин ҫумӗнчи ремесленнӑй училищӗре вӗренекенсенчен нумайӑшӗ срокченех вӗренсе пӗтернӗ те пиллӗкмӗш разряд илмелли сӑнавлӑ ӗҫсене питех те пахан туса пыраҫҫӗ. Ҫамрӑк токарьсем Фундаев, Шарафьев тата ыттисем те куллен сменӑра икшер норма туса пыраҫҫӗ. 16 ҫулхи слесарь Романов кунран-кун нормӑна 300 процент е ытларах та тултарса пырать. Сентябрь уйӑхӗнче вӑл 1254 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ. Челябинск облаҫӗнчи 3-мӗш номерлӗ ФЗО шкулӗнче вӗренекен вуншар ачасем Копейск рудникӗнче проходчиксем, забойщиксем тата навалоотбойщиксем пулса ӗҫлеҫҫӗ, нормӑсене ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ. Ҫак шкулти Кирпичников ученик отбойнӑй молотокпа ӗҫлеме питӗ аван вӗренсе ҫитнӗ, вӑл кашни сменӑра виҫшер норма тӑвать.

Ремесленнӑй училищӗсенче вӗренсе тухнисем рационализаторла паха сӗнӳсем парса пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Молотоври Сталин ячӗпе тӑракан заводра 16 ҫулхи Александр Малых, рационализаторла чылай майсемпе усӑ курса, заданине виҫӗ хут ытларах тултарнӑ. Ремесленнӑй училищӗрен вӗренсе тухнӑ Привалов питӗ паха приспособлени шухӑшласа кӑларнӑ, ҫав приспособлени ӑна пӗр питех те пысӑк производствӑллӑ операцине тӑвас ӗҫе икӗ хут ытла хӑвӑртлатма май панӑ.

Нимӗҫсен 2.000 ҫын вилсе юлнӑ

КАНТАР-ХӖВЕЛАНАҪ ЕНӖ, сентябрӗн 29-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Владимировпа Харченко юлташсем командир пулса ертсе пыракан чаҫсем сентябрӗн 27-мӗшӗнче пӗр харӑссӑн хӗссе, противника Б. тата Д. ялӗсен линийӗ ҫинчен сирпӗтсе янӑ. Малтанхи даннӑйсем тӑрӑх, противникӑн ҫапӑҫу хирӗнче 2.000 ҫын вилсе юлнӑ, 300 ҫынна тыткӑна илнӗ. Пирӗн трофейӑсем—тӗрлӗрен калибрлӑ 41 оруди, 2 танк, 1 радиостанци, 21 пулемет тата темиҫе ҫӗр винтовка.

Ҫапӑҫура подполковник Семенов тата капитан Бурик уйрӑмах палӑрнӑ. Наступлени малалла пырать.

В. СОБОЛЕВ.

Чехословакири лару-тӑру ҫивӗчленсе ҫитнӗ

ЛОНДОН, сентябрӗн 30-мӗш. (ТАСС). Чехословакирен килсе тӑракан сведенисем ҫӗршывра лару-тӑру питех те ҫивӗчленсе ҫитни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ.

Рейтер агентствин корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: Чехипе Моравире саботажла актсемпе забастовкӑсем вӑйланса ӳссе кайнӑ пирки Нейрата отставкӑна кӑларнӑ. Гитлер чехсем хирӗҫ тӑнине юн ӑшне путарма шут тытнӑ. Кун ҫинчен Чехипе Моравии протекторӗн постне паллӑ палач-садиста Гейдриха, оккупациленӗ ҫӗршывсенчи тискер ӗҫсем туса пынӑшӑн хӑйне «Европа палачӗ» тесе ят илнӗскере, лартни питех те витӗмлӗн кӑтартса парать.

Малтан кӗтсе тӑнӑ пекех пулса тухрӗ: Гейдрих Чехословакире хӑй хуҫа пулса тӑрассине ҫӗршывра чрезвычайнӑй положени туса хунинчен тата массӑллӑн асаплантарса вӗлерессисенчен пуҫласа ячӗ. Ҫӗршыври мӗнпур отельсене, ресторансене, киносене, обществӑллӑ учреждениесене, пухусен залӗсене 22 сехет ҫитсен хупмалла. Чехсен пухӑвӗсене, вӗсем кирек мӗнле шухӑшлӑ пулсан та, тата спектакльсене, концертсене, спортпа культура уявӗсене чарса лартнӑ. Ҫӗршывра ҫар сучӗсем алхасаҫҫӗ, вӗсем «чрезвычайнӑй положенин» сӑлтавӗпе усӑ курса, персе е ҫакса вӗлермелле, тесе икӗ тӗрлӗ приговор ҫеҫ йышӑнаҫҫӗ.

Протекторат пичечӗ ҫапла пӗлтерет: Прагӑра ҫар сучӗ ҫар главнокомандованийӗн генералӗ пулнӑ Иозеф Быллине тата дивизи генералӗ пулнӑ Гуго Войта персе вӗлерме приговор йышӑннӑ. Ҫав трибуналах гитлерла оккупантсене хирӗҫ активлӑн кӗрешсе пынӑ тесе айӑпласа Ладислаоси Комзака тата Венцель Франка асаплантарса вӗлерме приговор йышӑннӑ.

«Государствӑллӑ изменӑшӑн тата саботажшӑн» бригада генералне Франц Горачека, ҫавӑн пекех антифашистсене—Франц Винза, Иоганн Решчука, Яромира, Седлычека тата ытти 15 гражданина персе вӗлерме приговор йышӑннӑ. Приговора пурнӑҫа кӗртнӗ. Англири радио ҫапла пӗлтерет: Прагӑра, Кладнора тата ытти хуласенче пыракан гитлерла террора ответлесе забастовкӑсем пуҫланса кайнӑ тата саботажла актсем час-часах пулса пыраҫҫӗ. Авиаци моторӗсем туса кӑларакан заводри рабочисем забастовка тунӑ. Гитлеровецсен ҫӗнӗ тискерлӗхӗсене тарӑхса ылханни пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх сарӑлнӑ.

Гитлерла „союзниксен“ лагерӗнчи хирӗҫӳсемпе чӑркӑшусем

СТОКГОЛЬМ, сентябрӗн 30-мӗш. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаҫатӑн Берлинри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: Братиславӑра Румыни, Хорвати тата Словаки хушшинчи калаҫусем пулса иртеҫҫӗ, ҫак калаҫусем «ҫак ҫӗршывсемшӗн пӗтӗмӗшле пулса тӑракан политикӑлла хӑшпӗр интерессене хӳтлес» пирки пыраҫҫӗ. Корреспондент шухӑшӗ тӑрӑх, сӑмах Венгрие хирӗҫле виҫӗ ҫӗршывӑн блокне тӑвасси ҫинчен пырать, мӗншӗн тесен территори тӗлӗшпе Венгрипе вӗсен хушшинче пыракан тавлашусенче вӗсемшӗн пуринӗшӗн те татса паман вырӑнсем пур.

Канашлӑва нимӗҫсем тӳрех сӗннипе пухнӑ, венгерецсем Хӗвелтухӑҫӗнчи фронта ҫӗнӗ дивизисем яма килӗшмесен, ҫапла вара нимӗҫсем вӗсене хӗссе пыма ҫӗнӗ япала туртса кӑларасшӑн.

Ҫак канашлӑва пухни Будапештра пысӑк канӑҫсӑрлӑх хускатса янӑ. Венгрин премьер-министрӗ Бардош Германин Будапештри посланникне протест панӑ.

Венгрипе Словакин чикӗри войскисен хӗҫпӑшаллӑ тытӑҫӑвӗ

НЬЮ-ИОРК, сентябрӗн 30-мӗш. (ТАСС). Германи «союзникӗсен» лагерӗнче пӗр-пӗринпе харкашасси малалла та пулса пырать. Венгерсемпе словаксем хушшинчи отношенисем уйрӑмах ҫивӗчленсе кайнӑ. Венгерсемпе словаксем хушшинче татти-сыпписӗрех тытӑҫусем пулнине кӑтартса параҫҫӗ. Оверсис ньюс агентстви чикӗри Житны-Остров пункт таврашӗнче Венгрипе Словаки войскисем хушшинче хӗҫпӑшаллӑ тытӑҫу пулса иртни ҫинчен пӗлтерет. Словаки войскисем Венгрин виҫӗ ялне, венгерсем Словакин виҫӗ ялне тытса илнӗ.

Болгария оккупациленӗ облаҫсенче хресченсене ҫаратать

СОФИЯ, сентябрӗн 29-мӗш. (ТАСС). Болгарири министрсен совечӗ решени йышӑннӑ, унта кӑтартнӑ тӑрӑх, ятарласа тунӑ комиссисене Битольски тата Скоплевски облаҫсенчи (Югославин Болгария оккупациленӗ облаҫӗсем) хресченсен «ытлашши юлакан тырпулне» туртса илме хушса кӑтартса панӑ. Пӗтӗм тырра Германине ӑсатма государствӑн хатӗрлев организацийӗсене памалла.

Боливи правительстви отставкӑна тухнӑ

НЬЮ-ИОРК, сентябрӗн 28-мӗш. Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Боливи правительстви отставкӑна тухнӑ. Министрсем ҫӗнӗ кабинет тӑвиччен хӑйсен вырӑнӗнчех юлаҫҫӗ. Отставкӑн сӑлтавӗсене пӗлтермеҫҫӗ. (ТАСС).

Англи летчикӗсем ҫамрӑксен фашизма хирӗсле Мускаври митингне янӑ салам

ЛОНДОН, сентябрӗн 28-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Лондонри истребительсен эскадрильин личнӑй составӗ ҫамрӑксен фашизма хирӗҫле Мускаври митингне ҫакӑн пек салам янӑ: «Сирӗн летчиксем пирӗнпе ҫыхӑнни пӗтӗмӗшлӗ ӗҫшӗн, нацистла, фашистла тиранине хирӗҫ пире пӗрлештерсе тӑрать. Ҫапӑҫури юлташсем! Пирӗн ҫӗршывсен ҫамрӑкӗсем агрессора хирӗҫ, мӗнпур ирӗклӗ халӑхсене тепӗр хут хӑйсем тӗллӗн никама пӑхӑнмасӑр пурӑнмалла тӑвассишӗн пӗрле кӗрешӗҫ. Эпир, Англин королевство авиацийӗн летчикӗсем, СССР летчикӗсене саламлатпӑр».

Англи авиацийӗн ӗҫӗсем

ЛОНДОН, сентябрӗн 29-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин авиаци министерстви кӑларнӑ коммюникене парать, унта ҫапла калануӑ: сентябрӗн 29-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи бомбардировщикӗсем Генуя, Турин хулисене тата Ҫурҫӗр Италин ытти пункчӗсене атакӑланӑ. Генуйӑра промышленность районне атакӑланӑ. Доксенче пысӑк пушарсем тухнӑ.

Англи бомбардировщикӗсен ытти соединенийӗсем Хӗвеланӑҫ Германи ҫине, ҫав шутрах Франфурт ҫине те вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Пиллӗк бомбардировщик хӑйсен базине таврӑнман.

Ҫыранри авиаци самолечӗсем Сен-Назерти (Франция) нефтехранилищӗне тата нефть ӗҫлесе кӑларакан завода пырса тапӑннӑ. Ҫак операцирен икӗ самолет таврӑнман.

* * *

ЖЕНЕВА, сентябрӗн 29-мӗш. (ТАСС). Римри радио Англи авиацийӗ сентябрӗн 29-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Ҫурҫӗрпе Кӑнтӑр Италин тата Сицилин хулисем ҫине массӑллӑн вӗҫсе пырса тапӑнни ҫинчен тӗплӗн пӗлтерет. Италин официальнӑй даннӑйӗсем тӑрӑх Англи самолечӗсем Турин, Милан, Генуя, Савона тата Специя ҫине фугаслӑ тата вут чӗртекен бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем пӑрахсан, чылай ҫуртсем ҫӗмӗрӗлнӗ тата пушарсем тухнӑ. Вилнисемпе аманнисем пур. Кунсӑр пуҫне, Англи авиацийӗ Палермо, Трапани, Марсал, Кастельветрано тата Марин ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ, чылаях ҫӗмӗрнӗ тата пушарсем кӑларнӑ.

* * *

ЛОНДОН, сентябрӗн 29-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, авиаци министерствин коммюникинче ҫапла кӑтартса панӑ: Англи истребителӗсем Францин оккупациленӗ зони ҫине разведка туса вӗҫсе ҫӳренӗ чух тавар поездне тата нефть тултарнӑ икӗ цистернӑна пенӗ, вӗсем ҫунса кайнӑ. Ҫавӑн пекех аэродромсем, войскӑсем тата пулеметсен йӑвисем ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Пӗр зенитнӑй орудине стройран кӑларнӑ. Англи самолечӗсем пурте хӑйсен базисене таврӑннӑ.

Англин пӗр самолечӗ, сентябрӗн 27-мӗшӗнче Ҫурҫӗр Франци ҫинче пулса иртнӗ операцире пӗтнӗ тесе шутланӑскер, хӑйӗн базине таврӑннӑ.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англи бомбардировщикӗсем сентябрӗн 29-мӗш ыран тенӗ чух Ҫурҫӗр Итали ҫине тата Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ Германи ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ.

Сентябрӗн 28-мӗшӗнче каҫ пулса ҫитсен неприятелӗн пӗччӗншер темиҫе самолечӗ Англи тата Кӑнтӑр Уэльсӑн ҫыранӗ ҫине пырса тухнӑ. Икӗ пунктра сахал кӑна сиенлетнӗ, ҫав пунктсенчен пӗринче нумай мар жертвӑсем пур.

Канада войскисен Франци ҫыранӗнчи рейчӗ

ЛОНДОН, сентябрӗн 30-мӗш. (ТАСС). Афи агентстви ҫапла пӗлтерет: Канада войскисем, Англире тӑраканскерсем, ҫак кунсенче Франци ҫыранӗ патне рейд туса ирттернӗ. Канадецсем ҫӗршывӑн ҫурҫӗр ҫыранӗ ҫине аннӑ та, Германин 28 офицерне тыткӑна илнӗ тата штабӑн питех те кирлӗ докуменчӗсене тытса илнӗ.

Польша президенчӗ Рачкевич тухса калани

ЛОНДОН, сентябрӗн 28-мӗш. Польша президенчӗ Рачкевич Польша халӑхне чӗнсе сӑмах тухса каланӑ, ӑна Британи радиовещани компанийӗ радио тӑрӑх панӑ. Рачкевич хӑйсен тӑван ҫӗршывӗнчен уйӑрӑлса, халӗ Совет Союзӗнче тӑракан Польша гражданӗсене ҫапӑҫакан поляксен речӗсене тӗреклетме чӗннӗ. (ТАСС).

Греци халӑхӗ выҫӑ пурӑнать

ЛОНДОН, сентябрӗн 29-мӗш. (ТАСС). Грецире продовольстви тӗлӗшпе лару-тӑру ҫивӗчленсех пырать. Ҫӗнӗ тырпула пухса кӗнӗ хыҫҫӑн малтанхи кунсенче хресченсен кӑштах запассем юлнӑ пулсан, халӗ ӑна нимӗҫсем тытса илнӗ. Нимӗҫсемпе итальянецсен хушшинче «влияни зонисене» тӗплӗн чикӗ туса палӑртман хӑшпӗр вырӑнсенче «ытлашши тырпула» илме икӗ хутчен килнисем те пулкалаҫҫӗ, малтан Германи оккупанчӗсем, кайран Итали оккупанчӗсем килеҫҫӗ. Маргаритион ҫывӑхӗнчи ялта ҫак кунсенче нимӗҫсен отрячӗпе итальянецсен отрячӗ тӗлпулнӑ. Ӗҫ ҫапӑҫса каясси патнех пырса ҫитнӗ.

Карточка системи туса хунӑ хуласенче, нимӗҫ чиновникне взятка памасӑр, карточка илме нимӗнле те май ҫук. Пурлӑхсӑр ҫынсем яланах тенӗ пекех карточкӑсем илеймесӗр тӑрса юлаҫҫӗ.

◆

БИБЛИОГРАФИ

Кирлӗ брошюра

Пурне те ҫар ӗҫне вӗрентесси ҫинчен Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗ постановлени йышӑннӑ май, Чӑвашгиз, хаҫатри хӑшпӗр материалсене пухса, брошюра туса кӑларчӗ*).

Брошюрӑра виҫӗ материал: 1) Пурне те ҫар ӗҫне вӗрентесси ҫинчен Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗ йышӑннӑ постановлени, 2) «Правда» хаҫатра 1941 ҫ. октябрӗн 18-мӗшӗнче тухнӑ умстатья, 3) «Известия» хаҫатра полковник С. Петровский ҫырнӑ статья («Задачи всеобщего военного обучения»).

Ҫак брошюрӑра пухса кӑларнӑ материалсем пурне те ҫар ӗҫне вӗрентес ҫӗрте командирсемпе политруксене (тата ҫар ӗҫне вӗренекенсене хӑйсене те) кирлӗ кӑтартусем параҫҫӗ. «Правда» умстатьи пурне те ҫар ӗҫне вӗрентесси политикӑпа ҫар енӗпе мӗнле пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен калать. Полковник С. Петровский статьинче, чи малтан, программа ыйтӑвӗсем ҫинчен каланӑ. Унта ҫар тактики тӗлӗшпе, пӑшал пеме вӗренес, строй йӗркине, сапернӑй ӗҫе, хими ӗҫне, санитари ӗҫне вӗренес тӗлӗшпе мӗн-мӗн тумаллине кӑскен каласа панӑ. Кунсӑр пуҫне, ҫар уставӗсене вӗренесси ҫинчен те каланӑ. Программӑна 110 сехет хушшинче вӗренсе пӗтермелле. Пурне те ҫирӗп те лайӑх вӗренсе пымалла. Кашни темӑнах практикӑллӑ ӗҫсемпе ҫыхӑнтарса вӗренмелле.

Пурне те ҫар ӗҫне вӗрентесси,—тенӗ «Правда» умстатьинче, конкретлӑ пулмалла, уҫӑмлӑ пулмалла. Вӑрҫӑра мӗн кирлине ҫеҫ, вӑрҫӑра мӗнле пулмаллине ҫеҫ вӗрентмелле.

В. М-С.

*) «Всеобщее обязательное военное обучение», вырӑсла, 18 стр., хакӗ 15 пус.

Ҫӗрулми кӑлараҫҫӗ

ИШЛЕЙ. Районри чылай колхозсем ҫӗрулми кӑларма пуҫларӗҫ. Тӑрӑн ялсоветӗнчи «Ҫӗнӗ пурнӑҫ», Чурачӑк ялсоветӗнчи Карл Маркс ячӗпе тӑракан колхозсенче ытлашши ӗҫ вӑйне пӗтӗмпех ҫӗрулми кӑларнӑ ҫӗре мобилизациленӗ. Карл Маркс ячӗпе тӑракан колхоз ҫӗрулми ҫуррине яхӑн кӑларса та пуҫтарчӗ. Вуншар колхозсем ҫӗрулми кӑларас ӗҫре хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

С. ГОРЛАНОВ.

Пӗтӗмпех пухса кӗртнӗ

ЕЛЧӖК. Патрекелӗнчи «Осоавиахим» колхоз 30 гектар ҫинчен вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ клевера пӗтӗмпех пухса кӗртрӗ. Клевера пуҫтарса кӗртнӗ ҫӗрте Зотникова, Вершкова колхозницӑсем нормӑна икӗ хут ирттерсе тултарнӑ.

П. ПЕТРОВ.

Чӑваш республики хӑйне валли сахӑр тума пултарать тата тумалла та

Юлашки ҫулсенче Кировски тата Вологодски облаҫӗсенче туса ирттернӗ опытсем Чӑваш республикин уйхирӗсенче те сахӑр кӑшманне ӑнӑҫлӑнах лартса тума май пуррине кӑтартса парӗҫ. Ҫакна шута илсе 1942 ҫулхи ҫуркуннерен пуҫласа Чӑваш республикинчи колхозсенче те сахӑр кӑшманӗ лартма ҫӗр лаптӑкӗ чылаях уйӑрмалла пулать.

Сахӑр кӑшманӗ тислӗк нумай тӑкса ҫемҫетнӗ килвырӑн участокӗсем ҫинче, кантӑр вырӑнӗсенче, ҫерем ҫӗтсе акмалла тунӑ вырӑнсем ҫинче уйрӑмӑнах вӑйлӑ пулать. Ҫакӑн пек вырӑнсенче, кӑшмана лайӑх пӑхса тӑрсан, гектартан 250—500 центнер сахӑр кӑшманӗ туса илме пулать. Ытти участоксем ҫинче лартас пулсан та, ҫӗре лайӑх ҫемҫетсе тӑрсан тата агротехника правилисене тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пырсан, гектартан 150—250 центнер е унтан та ытларах сахӑр кӑшманӗ туса илме май пур.

1942 ҫулта пысӑк тухӑҫлӑ сахӑр кӑшманӗ туса илмелли никӗсе хывма халех, ҫак кӗркуннеренех тытӑнни кирлӗ. Чи малтан сахӑр кӑшманӗ валли юрӑхлӑ ҫӗр суйласа илес пулать. Ҫав ҫӗр лаптӑкӗ ҫине тислӗк тата минераллӑ удобренисем кӑларса 22—25 сантиметр тарӑнӑш сухаласа хӑвармалла.

Сахӑр кӑшманӗ лартмалли ҫӗр лаптӑкне уйӑрнӑ чухне чи малтан ҫакна шута илес пулать: ҫерем ҫӗтсе акмалла тунӑ вырӑнсенче ҫӗр айӗпе сӑрхӑнса юхакан шыв мӗнчул аялтине шута илмелле. Ҫӗр айӗпе юхса выртакан шыв ҫӗр ҫийӗнчен пӗр метр ҫиелте мар пулмалла. Ҫавӑн пекех кантӑр акса тӑвакан вырӑнсене, килвырӑн участокӗсене уйӑрса илме ытларах тӑрӑшмалла. Сахӑр кӑшманне хире лартас пулсан, чи малтан кӗрхи культурӑсем акса илнӗ вырӑнсене (тислӗкпе ҫемҫетнисене) е таса ҫӗртме пуссине уйӑрса илмелле. Ҫав участоксем ҫумкурӑкӗсенчен таса пулмалла тата сиен кӳрекен хурт-кӑпшанкӑсем унта пулмалла мар. Кӑшмана кӗллӗ тата сутӑ-кӑвак ҫӗр ҫине лартас пулсан, ҫав лаптӑка малтан 18—20 сантиметр тарӑнӑш сухаланине шута илес пулать. Кайран вара ҫав участоксем ҫине 20—22 сантиметр тарӑнӑш сухаламалла пултӑр.

Сахӑр кӑшманӗ лартма уйӑрнӑ участока кӗркунне сухаланӑ чухне кашни гектар ҫине 20—30 тонна таран тислӗк тата минераллӑ удобренисем: 1 центнер аммиачнӑй селитра е 1,5 центнер сернокислӑй аммони, 6 центнер фосфорит ҫӑнӑхӗ е 3 центнер суперфосфат тата 1—1,2 центнер кали тӑварӗ кӑларас пулать.

Азотлӑ удобренисем пулмасан, тислӗкпе пӗрле фосфоритлӑ удобренисем, кали тӑварӗ вырӑнне фосфорлӑ удобренисем кӑларма пулать. Пӗр гектар ҫине 4—5 центнер кӗл кӑларма юрать. Кӗркунне уя тӗп удобренисем кӑларнисӗр пуҫне, сахӑр кӑшманӗ лартас умӗн сука пуссине удобренисем кӑларни тата подкормка пани пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑл сахӑр кӑшманне вӑйлӑ ӳсме пулӑшать.

Сахӑр кӑшманне планпа лартса тунисӗр пуҫне, Чӑваш республикинчи колхозсемпе колхозниксен хӑйсене валли килвырӑн участокӗсенче плансӑр лартса тӑвассине те ҫине тӑрсах сарса пыма тӑрӑшас пулать. Ҫапла тунипе кашни колхозник хуҫалӑхӗ хӑйне валли кирлӗ таранах сахӑр туса илме пултарать.

Сахӑр кӑшманӗнчен килтех сахӑр туса хатӗрлеме пулать, ӑна тума йывӑр мар. Пиҫсе ҫитнӗ тата чирлӗ мар сахӑр кӑшманне сивӗ шыв ҫине ярса ҫуса тасатаҫҫӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн кӑшманӑн ҫеҫкеллӗ вӗҫне касса пӑрахаҫҫӗ. Тымар вӗҫне те касса пӑрахмалла. Хуппине ҫӗҫӗпе хырса тасатмалла. Ҫакӑн хыҫҫӑн кӑшмана ҫаплипех тӑм кӳршек ҫине тултармалла, ун ҫине кӑштах шыв ярса лартаҫҫӗ. Ҫапла вара кӳршеке ҫиелтен ҫатмапа витсе йӗри-таврашне чустапа сӗрсе питӗреҫҫӗ те 6—8 сехетлӗх кӑмакана пиҫме кӗртсе лартаҫҫӗ. Ҫавӑн чухне кӑмакара ытлашши вӗри пулмалла мар, ҫӑкӑр пиҫсе тухнӑ хыҫҫӑн лартсан аванрах. Кӑшман пӗтӗмпех пиҫсе ҫитсен унӑн сӗткенӗ тухма тытӑнать, ҫавӑн чухне кӑшманӑн тӗсӗ кӑштах саррӑн курӑнакан пулать.

Пиҫнӗ кӑшмана кӑмакаран кӑларнӑ хыҫҫӑн, йывӑҫ корыта ҫине тӑкса ҫӗрулми тӳмелли тукмакпа тӳсе нимӗр пек тумалла. Ҫавӑн хыҫҫӑн ӑна хутаҫа тултарса е пресс хушшине хурса сӗткенне сӑрӑхтарса кӑлармалла. Сӗткенне тӑмран тунӑ плошка ҫине яраҫҫӗ те, шӗвӗр пӳрнепе чиксен ҫур вершук тӑршшӗ ҫип пек тӑсӑлакан пуличченех пӑтратса тӑраҫҫӗ.

Сӑрӑхтарса кӑларнӑ сӗткен ҫине ҫавӑн чухлех е 25 процент таран сӗт яма юрать. Унтан вара сӑрӑлса ҫитиччченех вӗретес пулать. Сӗтпе вӗретнӗ сӗткене ҫу сӗрнӗ тарелка ҫине ярса лартаҫҫӗ те, вӑл вара хӑех хытса ларать. Ҫакӑнпа вара сахӑр вырӑнне усӑ курса чей ӗҫме юрать.

В. ФРАНЦЕССОН,

Удобренисен, Агротехникӑн тата Агропочвоведенин Пӗтӗм Союзри научно-исследовательски институчӗн старший научнӑй сотрудникӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редактор заместителӗн — 3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, ялхуҫалӑхӗпе промышленность пайӗсен — 0—88, ҫырусемпе рабселькорсен пайӗн — 2—30, дежурнӑйӑн — 6—23, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5539. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 490. Ф. б. э8 84 п. л.